Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТЯБӖР 30
ВЫРСАРНИКУН
251(5064) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухаҫ. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ. Пӗр №-рӗ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—0—85, ялхуҫалӑх пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышленноҫ пайӗн—7—97, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Профсойузсен ӗҫне ...льшевикла организацилер

...социалисӑмлӑ стройӑн ҫиҫте... ...фсойузсем чи хисеплӗ вырӑн... ...не йышӑнаҫҫӗ. Профсойузсем ...рщыври рабочисене, инженер... ...техниксене, служӑшчисене пурне ...ене пекех пӗрлештерсе тӑраҫҫӗ. Профсойузсем—коммунисӑм шкулӗ. Профсойузсем советпа хуҫалӑх, коопераципе суту-илӳ тата ытти ӗҫсене тума хӑйсен хушшинчен чи лайӑх ҫынсене, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн, совет халӑхӗн ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑй-хала хурса ӗҫлекен ҫынсене уйӑрса параҫҫӗ. Профсойузсем рабочи класа унӑн малта пыракан отрядӗпе—коммуниссен партипе ҫыхӑнтарса тӑраҫҫӗ.

Халӑх тӑшманӗсем: троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла бандитсем, шпионсем, диверсантсем профсойузсен социалисӑм строительствинчи пысӑк рольне пӗтерме хӑтланса, темӗн тӗрлӗ киревсӗр ӗҫсем тунӑ. Тӑшмансем совет профсойузӗсен аппарачӗсене бӳрократлантарма, вӗсене членсен йышлӑ массинчен уйӑрса ямa тӑрӑшнӑ. Анчах тӑшмансен усал ӗмӗчӗ ӗҫе кӗмерӗ. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе совет халӑхӗ тӑшмансен киревсӗр ӗҫне вӑхӑтра палӑртса, пролетари диктатурин ҫивӗч аллипе ҫапса аркатрӗ.

Большевиксен партин сталинла Тӗпкомӗ йертсе пынипе, вӑл пулӑшнипе профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VI-мӗш пленумӗ (1937 ҫул) профессиллӗ сойузӗнче ҫитменлӗхсене профессиллӗ сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене хӑвӑрт пӗтермели тӗрӗс ҫула кӑтартса хӑварчӗ. Сталинла Конституцине пурнӑҫа кӗртни социалисӑмлӑ ҫӗршывӑн пӗтӗм политикӑлла пурнӑҫӗнче ҫаврӑну турӗ, ӗҫҫыннисен нумай мӗлйунлӑ массисен политикӑлла тата производствӑлӑ активлӑхне нихӑҫанхинчен ҫӳле ҫӗклерӗ. Ҫаксем пурте профессиллӗ сойузсен ӗҫӗсене урӑхлатса ҫӗнетме, чи малтан профсойузсенчи демократисӑма сарса пыма хушнӑ.

Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VI-ш пленумӗн решенисене профсойуз организацисем пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пыраҫҫӗ-ха? Ҫентябӗрӗн 2—16-мӗшӗсенче Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленумӗ пулса иртрӗ. Кунта иртнӗ пленум кӑтартса хӑварнисене пурнӑҫа кӗртесси мӗнле пынине большевикла тӗрӗслесе тухрӗҫ. Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленумӗ профсойузсем VI-мӗш пленумӗн решенисене пурнӑҫа кӗртсе пырса пысӑк ӗҫсем тунине, большевикла партин тивӗҫлӗ помошникӗсем пулнине, совет халӑхне Ленин—Сталин парти тавра тачӑ пӗрлештерсе тӑма пулӑшнине палӑртрӗ. Профсойузсем хӑйсен ӗҫӗсене те чылайах лайӑхлатнӑ. Прфсойузсен демократине, членсен массисем умӗнче профорганcем ответ тытассине вӑйлатнӑ. Членсен йышлӑ массисенчен уйӑрӑлса тӑнине пӗтерес тӗлӗшпе чылай пысӑк ӗҫсем тунӑ. Профсойуз членӗсене ӗҫе нумайӑн хутшӑнтарнӑ, социаллӑ страховани ӗҫне профсойуз членӗсен пурнӑҫне лайӑхлатас, культурине хӑпартас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тунӑ.

Анчах профсойуз организацисем тунӑ ӳсӗмсем — малтанхи ӳсӗмсем ҫеҫ-ха. Профсойузсен ӗҫӗнче халӗ те пысӑк ҫитменлӗхсем нумай. Ҫакна Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленумӗ уҫҫӑн палӑртрӗ. Ҫакнах октябӗрӗн 27—28-мӗшӗсенче пулса иртнӗ Чӑваш республикӗнчи профактив канашлӑвӗ те лайӑх кӑтартса пачӗ.

Канашлура медсантруд работникӗсен, вӑрманта тата сулӑ йухтарас ӗҫре ӗҫлекенсен, политпросветработниксен сойузӗсен Чӑваш обкомӗсем вырӑнсенчи ӗҫсене сводкӑсем тӑрӑх ҫеҫ пӗлнине, профсойуз членӗсен нушисемпе ыйтӑвӗсене пӗлсе тӑрса, вӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшманнине хытӑ критиклерӗҫ. Кунашкал пысӑк ҫитменлӗхсем государствӑ учрежденисенче ӗҫлекенсен, суту-илӳпе кооперацинче ӗҫлекенсен сойузӗсен обкомӗсенче те туллиех.

Профсойуз демократине пӑснине халӗ те пӗтермен. Промсойузри местком (Шупашкар), Ҫӗмӗрлери „Большевик“ савӑтри завком 1937 ҫултанпа профсойуз членӗсен пухувӗсенче отчот туман. Профсойуз демократине пӑснӑ фактӑсем ҫинчен канашлура пулнӑ йулташсем нумай каласа пычӗҫ.

Профсойузсен ӗҫе сыхлас, массӑлӑ-производствӑлӑ, культурӑлӑ, массӑлӑ оборонӑ ӗҫӗсене нумай лайӑхлатмала. Халӗ Чӑваш республикӗнчи профсойузсем пӗри те ҫак ӗҫсене кирлӗ пек организацилемен. Ҫапла, Куславкка комбинатӗнче, ӗҫе сыхлассине начар организациленине пула, производствӑра суранланакансем чакса пырас вырӑнне, ӳссе пыраҫҫӗ. Кунашкал фактӑсене ытти предприятисенче те тӗл пулма пулаҫ. Профсойузсем стахановла йухӑма йертсе пырассине те кирлӗ пек организацилемен-ха. Хӑма савӑчӗсенче ӗҫлекенсен сойузӗн обкомӗ стахановецсем ҫинчен сӑмах пуҫласан нимӗн те калама пултараймасҫ, тӳрех тахҫанхи сведенисене туртса кӑлараҫ. Профсойузсем массӑсене политикӑлла воспитани парассине те кирлӗ пек организацилемен-ха. Йулашкинчен, пирӗн профорганизацисен ӗҫӗнчи бӳрократисӑм, ӗҫе питӗ вӑраххӑн туни, массӑлӑ контроль ӗҫӗ вӑйсӑрри те пысӑк ҫитменлӗх пулса тӑраҫҫӗ.

Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленумӗ ҫак ҫитменлӗхсене пӗтермели ҫула кӑтартса пачӗ. Профсойуз организацисен, вӗсен руководителӗсен задачи—пленум решенисене пурнӑҫа кӗртме профсойуз членӗсен анлӑ массисене мобилизацилесси пулаҫ. Профсойузсен обязанноҫӗ—социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва, стахановла йухӑма анлӑн сарасси, профсойуз членӗсен активлӑхне ҫӗклесси, революцилӗ сыхӑлӑха хӑпартса, троцкисла-бухаринла тата буржуалӑ-националисла бандӑсен йулашкисене нимӗн хӑвармиччен пӗтересси пулаҫ. Парторганизаци йертсе пынипе Чӑваш республикӗнчи профсойузсем Профсойузсен Пӗтӗм Сойузри Тӗп Совечӗн VII-мӗш пленум решенисене пурнӑҫа кӗртсе, хӑйсен ӗҫне большевиксен парти тата Сталин йулташ хушнӑ пек урӑхлатса ҫӗнетсе, ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвӗҫ.

Ленинла комсомола
ПСҪЛКС 20 ҫул тултарнӑ йубилей кунӗнчи салам

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийӗн Тӗп Комитечӗ ленинла комсомола, вӑл 20 ҫул тултарнӑ кун йачӗпе, саламлаҫ.

Ҫирӗм ҫул хушшинче комсомол кӗрешӳпе ҫӗнтерӳсен чаплӑ ҫулне утса тухрӗ. Комсомол вуншар, ҫӗршер пин чаплӑ совет ҫыннисене, совет халӑхӗн хӑйулӑ, шиксӗр бойецӗсене, рабочисен, колхозниксен, совет интеллигенцийӗн ҫамрӑк ӑрӑвӗн лайӑх представителӗсене пӑхса ӳстерчӗ, вӗсем социалисӑм строительствин пур отраслисенче те—ҫарпа шкулта, стройкӑсемпе савӑтсенче, совхозсемпе колхозсенче, наукӑ, техникӑ, искусствӑ облаҫӗсенче, профсойузсенче, кооперацинче ырмиканми ӗҫлеҫҫӗ.

Ҫак ҫитӗнӳсене комсомол вӑл яланах большевиксен партийӗ йертсе пыни тӑрӑх кӗрешнипе, Ленин—Сталин ялавне ҫӳлте тытнипе, унӑн тавра мӗлйуншар ӗҫҫынни ҫамрӑкӗсене пӗрлештернипе тунӑ, вӑл яланах партин тӗрӗс помошникӗ, унӑн бойевой резерви пулнӑ.

ПСҪЛКС Тӗпкомӗ йулашки вӑхӑтра ҫамрӑксене идейӑлӑ воспитани парас, комсомола тӑшманла елементсенчен тасатас, комсомол работникӗсен ҫӗнӗ кадрӗсене йертсе пыракан вырӑнсене лартса пырас ӗҫсенче чылай пысӑк йӑнӑшсем туман пулсан, ку ҫитӗнӳсем татах та пысӑкрах, нумай йенлӗрех пулма пултарнӑ.

ПСК(б)П Тӗпкомӗ ленинла комсомола пирӗн ҫамрӑксене марксисӑм-ленинисӑм йенӗпе, ССР Сойузӗнчи халӑхсен тӑшманӗсене хирӗҫ пӗр килӗшми кӗрешес йенӗпе, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем хушшинче тӑванла пӗр шухӑшлӑх ҫыхӑнӑвӗсене тӗреклетсе пырас йенӗпе воспитани парас ӗҫре ҫитӗнӳсем тума сӗнет.

ПСК(б)П Тӗпкомӗ шанаҫ: марксисӑм-ленинисӑм вӗрентӗвӗпе хӗҫпӑшалланнӑ комсомол социалисӑмлӑ хуҫалӑхӑн пур облаҫӗсенче, культурӑра, хамӑр ҫӗршывӑн оборонӑ хӑватне вӑйлатас, хамӑр ҫара, хамӑр флота, хамӑр авиацине тӗреклетес ӗҫре тата ытларах пуҫарулӑх, дисциплинӑ кӑтартса ӗҫлӗ.

Тӗпком шанаҫ: комсомол малашне те совет тӑван ҫӗршывӗпе пӗтӗм тӗнчери пролетариат умӗнчи парӑма хӑйӗн пурнӑҫне шеллемесӗр пурнӑҫа кӗртӗ.

Сывӑ пулччӑр совет ҫамрӑкӗсем!
Сывӑ пултӑр ленинла комсомол!

Пӗтӗм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийӗн Тӗп Комитечӗ.

ССРС орденӗсемпе. „За отвагу“ тата „За боевые заслуги“ медальсемпе наградӑлани

Октябӗрӗн 28-29-мӗшсенче центӑрти хаҫатсем ҫинче ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет Президиумӗ Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн тата чикӗри хуралӑн командирӗсемпе начальникӗсен составне, красноармейӗцсене, командирсемпе начальниксен ҫемйе членӗсене, госпитальсемпе суту-илӳ флочӗн работникӗсене ССР Сойузӗн орденӗсемпе тата медалӗсемпе наградӑласси ҫинчен кӑларнӑ Указӑн малалине пичетлесе кӑларнӑ.

Хасан кӳлли районне сыхланӑ вӑхӑтра ҫапӑҫу заданисене кӑтартулӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн, хӑйулӑхпа паттӑрлӑх палӑртнӑшӑн 40 ҫынна Ленин орденӗпе, 680 ҫынна „Хӗрлӗ Йалав“ орденӗпе, 680 ҫынна „Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр“ орденӗпе, 560 ҫынна „За отвагу“ медальпе, 560 ҫынна „За боевые заслуги“ медальпе наградӑланӑ.

Хаҫатсен ҫитес номӗрӗсенче наградӑсем парасси ҫинчен кӑларнӑ Указӑн малали пичетленет.

(ТАСС).

Газогенератӑрлӑ автомобилсен чупувӗнче пулнӑ ҫынсене наградӑланӑ

Газогенератӑрлӑ автомашинӑсене сӑнаса пӑхас тӗлӗшпе, вӑл автомашинӑсен чупуне иртерес тӗлӗшпе правительствӑ панӑ заданийе ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн (автомашинӑсене йӑвӑҫ ҫунтарса ӗҫлеттерсе 10.890 километр ҫул тунӑ), ССРС Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ 5 ҫынна: чупу командирне Никанорӑв йулташа, унӑн помошникӗсене Барышенковпа Фомин йулташсене тата икӗ шофӗре—Йереминпа Йелизарӑв йулташсене „Знак почета“ орденӗпе наградӑланӑ. 25 шофӗра, механика тата чупун 2 контрольорне ССРС Верховнӑй Совечӗн Хисеплӗ граматипе наградӑланӑ.

(ТАСС).

Столицӑри комсомолӗцсем ПСҪЛКС ҫирӗм ҫул тултарнине хисеплесе хатӗрленӗ парнесем

Ленинла-сталинла комсомол ҫирӗм ҫул тултарнине столицӑри комсомолӗцсем хаваслӑн кӗтсе илчӗҫ.

Мухтавлӑ йубилей йачӗпе районсенче комсомол райкомӗсен чаплӑ пленумӗсем пулса иртнӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн центрти суртӗнче Мускав Ҫар округӗнчи комсомол активӗн чаплӑ пухӑвӗ пулса иртнӗ, вӑл пухура Мускав Ҫар округ ҫарӗсен командуйушчийӗ Совет Сойузӗн Маршалӗ С. М. Буденный йулташ, ҫавӑн пекех Хасан кӳлли районӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ лейтенант Лильчицкий йулташ, Совет Сойузӗн Геройӗ Левченко йулташ т. ыт. те тухса калаҫнӑ.

Хапрӑксемпе савӑтсенчи комсомолӗцсем, столицӑри аслӑ шкулсенчи студентсем тата ҫамрӑк учонӑйсем, Хӗрлӗ Ҫар бойецӗсем йубилейе чысласа пиншер чаплӑ парнесем хатӗрленӗ.

ПСҪЛКС 20 ҫул тултарнӑ тӗле хатӗрленес ӗҫре Мускаври Сталин йачӗпе тӑракан автомобил савӑтӗнчи ҫамрӑк патриотсем, калама ҫук чаплӑ йухӑма—тӑван ҫӗршыв-аннемӗр вальли парнесем хатӗрлес йухӑма пуҫарса йаракансем пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Вӗсем хатӗрленӗ парнесем хушшинче—ҫӑмӑл ҫӳремели 10 автомашинӑ тата виҫӗ тӗнеллӗ 10 грузовик. Савелйӗв комсомолӗц ПВХО значкисӗсем 165 ҫын хатӗрленӗ, Беликӑвӑ — ПВХО значкисӗсем 30 ҫын, Дуданец—ворошиловла тӗл перекенсем 88 ҫын хатӗрленӗ. Нумай ҫамрӑксем производствӑран уйӑрӑлмасӑр вӗренсе льотчиксен шкулне пӗтернӗ. Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан подшипниксем тӑвакан 1-мӗш государствӑ савӑтӗнчи ҫамрӑксем комсомол 20 ҫул тултарнӑ мухтавлӑ куна тивӗҫлӗн кӗтсе илнӗ. ПСҪЛКС 20 ҫул тултарнӑ йатпа организациленӗ комсомолӗцсемпе ҫамрӑксен вуншар бригадисемпе сменисем, участкисем йубилейа парне кӳрес шутпа производствӑлӑ заданисене срукченех тултарнӑ. Комсомолӗц Гордашникӑв йулташ йертсе пыракан ҫамрӑксен смени кунсеренех 70 пин ролик туса кӑлараҫ (нормӑпа 53 пин тумала). Сменӑ плана срукченех тултарнӑ. Сменӑри ҫамрӑк рабочисем пурте—стахановӗцсем.

Комсомол йубилейӗ тӗлне савӑтри ҫамрӑк рабочисемпе специалиссем пурӗ 500 ҫын ытла пӗрремӗшпе иккӗмӗш сыпӑкри ГТО значокӗсене илме нормӑсем панӑ.

Комсомолӑн мухтавлӑ йубилейне хатӗрленес ӗҫре Мускаври прожектӑр савӑтӗнчи комсомолӗцсем те сахал мар ҫитӗнӳсем тунӑ. Производствӑра ӗҫлекен ҫамрӑксем пурте—стахановӗцсем.

(ТАСС).

Большевикла тимлӗхпе ӗҫлени кирлӗ

КӲКЕҪ. Шупашкар районӗ кӗрхи ҫӗртме планне тултарассипе ҫаплах йулса пыраҫ. Октябӗрӗн 28-ш тӗлне районӗпе тӑватӑ йалсоветра ҫеҫ (Шӗнерпуҫ, Анаткас, Шемшер тата Ҫатра Лапсар) кӗрхи ҫӗртме туса пӗтернӗ. Машинӑ-тракторӑр станци те хӑйӗн планне 38 процент ытларах ҫеҫ тултарнӑ. Кӗрхи ҫӗртме сухи тума уйӑрнӑ тракторсенчен ҫуррине йаханах йӗркелӗ ӗҫлеймеҫҫӗ.

Районри партипе совет тата ҫӗр ӗҫ пайӗ йенчен кӗрхи ҫӗртме сухине ҫӗр шӑниччен туса пӗтерме колхозниксен массине мобилизацилеймен. Ку вӑл ҫакӑнтан та лайӑх курӑнаҫ: район центрӗ Кӳкеҫ йалсоветӗнче лараҫ пулсан та йалсовечӗ кӗрхи ҫӗртме тӑвассипе районра чи кайа йулнӑ. Районри руководительсем Кӳкеҫ йалсоветне мала кӑларас пирки сахал пулӑшнӑ.

Пайанхи куна 12 колхозра авӑн ҫапса пӗтермен. Государствӑ умӗнчи обязательствӑсене Октябӗр уйавӗччен парса татассишӗн те ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. ПСК(б)П райком ҫекретарӗ Мальутин йулташ государствӑна ҫӗрулми тӑратмали плана районӗпе 85 процент йахӑн тултартӑмӑр, тет пулсан, колхозниксем хӑйсен пахча вырӑнӗнчен памали ҫӗрулми планне тултарассипе йединоличник хуҫалӑхӗсенчен те кайа йулнӑ. Октябӗрӗн 25-мӗш тӗлне йединоличник хуҫалӑхӗсем хӑйсен планӗсене 40,5 процент тултарнӑ пулсан, колхозник хуҫалӑхӗсем тӑрӑх плана 19 процент ытларах ҫеҫ пурнӑҫа кӗртнӗ.

Пахча-ҫимӗҫ сойузӗн Шупашкарти кантурӗ те хӑйӗн хатӗрлев бази мӗнле ӗҫленине куллен тӗрӗслесе тӑмасҫ. Октябӗрӗн 27-мӗшӗнче Шупашкар районӗнчен ҫӗрулми пама Шупашкара 300 лав йахӑн килнӗ, вӗсенчен 50 лава йахӑн ҫӗрулмийӗ параймасӑрах кайала таврӑннӑ.

Шупашкар районӗн ялхуҫалӑх ҫулне хӑвӑрт вӗҫлесе ҫитерме хальхинчен лайӑхрах ӗҫлени кирлӗ. Октябӗр уйавне пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе, чи малтан государствӑ умӗнчи обязательствӑсене тата кӗрхи ҫӗртме планне тултарассишӗн пыракан кӗрешӳ хӑвӑртлӑхне вӑйлатмала.

А. Г.

Кӗрхи ҫӗртмене 40 гектар ҫеҫ тунӑ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Ваҫка Ҫырминчи „Ҫӗнӗ пурнӑҫ“ колхозӑн кӗрхи ҫӗртме сухине вӑхӑтра туса хӑвармашкӑн пур майсем те ҫителӗклӗ пулнӑ. Туртӑм вӑйӗ ҫитмест, тесе каламали ҫук, лашасем ахаль тӑраҫҫӗ. Ялхуҫалӑх ҫулӗ вӗҫленсе пынӑ май, колхозниксем те ӗҫсенчен пушанса пыраҫҫӗ. Кӗрхи ҫӗртме планне тултармасӑр халиччен тӑсӑлса пыни вӑл — колхоз правлени йенчен куллен йертсе пыманнинчен ҫеҫ килнӗ. Пирӗн колхозӑн пурӗ те 90 гектар ҫинче кӗрхи ҫӗртме туса хӑвармала. Ҫавах та пайанхи кунччен 40 гектар ҫеҫ сухаланӑ.

Н. Йарадайӗв.

Кайа йулнӑ йалсоветсене пулӑшатпӑр

ИШЛЕЙ. (Телефон тӑрӑх). Октябӗрӗн 27-мӗшне Ишлей районӗнчи колхозсем государствӑна ҫӗрулми тӑратмали плана—79,6 процент, колхозник хуҫалӑхӗсем—28,8 процент, йединоличниксем—37 процент ҫеҫ тултарнӑ. Пайанхи куна „Бойевик“, „Ыраш“, „1-ое Мая“ „Париж Коммунӗ“, Крупскайа йачӗпе тӑракан, „Сархорн“, „Новая жизнь“, „Большевик“, „Стахановец“, Свердлов, Кирӑв йачӗсемпе тӑракан тата „Ҫӗнӗ хунав“ колхозсем государствӑна ҫӗрулми парса татнӑ. Ҫав вӑхӑтрах „Новое Акрамово“, „Танк“, „Самолет“, „Новая жизнь“, Доронин йачӗпе тӑракан колхозсенчен пӗри те ҫӗрулми паман.

Йулашки кунсенче государствӑна ҫӗрулми тӑратас йенӗпе хӑшпӗр улшӑнусем тунӑ. Мускав вальли ҫӗрулми вӑхӑтра хатӗрлесе панӑ. Кайа йулнӑ йалсоветсене пулӑшма районран ҫынсем йанӑ.

Тепейӗв.

Плана тултарассишӗн кӗрешӳ пыраҫ

ЕЛӖК. (Телефон тӑрӑх). Государствӑ интересӗсене колхозсемпе колхозниксен интересӗсенчен уйӑрма ҫук. Колхоз пурнӑҫӗн пирвайхи заповечӗ—вӑл государствӑ умӗнчи обязательствӑсене вӑхӑтра, тӳрӗ кӑмӑлпа тултарасси пулаҫ. Ҫакӑншӑн районри чылай колхозсем большевикла кӗрешеҫҫӗ. Пирӗн район октябӗрӗн 25-мӗшне государствӑна ҫӗрулми тӑратмали плана 54,7 процент тултарнӑ. Унтанпа районра чылай улшӑнусем пулса иртнӗ. Пайана илсен, Хирлеппуҫ, Писенер, Мӑн Пакӑш йалсоветсем ҫӗрулми парса татнӑ. Кайа йулнӑ йалсоветсем те хӑйсен планӗсене Октябӗр уйавӗччен тултарччӑр тесе, ӗҫре пулӑшса пыма районри активран ҫынсем йанӑ. Пирӗн районӑн Мускав вальли ҫӗрулми 700 тоннӑ хатӗрлесе Вӑрнар станцине леҫсе памала пулнӑ, октябӗрӗн 28-мӗш тӗлне 274 тоннӑран мала хатӗрлесе йарайман.

Государствӑна ҫӗрулми тӑратас плана тултарассипе Мускава ҫӗрулми тӑратас ӗҫсене ҫак кунсенчех вӗҫлесе ҫитерессишӗн кӗрешетпӗр.

Константинӑв.

П. Осипенко хӑйӗн земльакӗсемпе калаҫни

Октябӗрӗн 27-мӗшӗнче, ҫӗрле геройиньӑ-льотчица Полинӑ Осипенко Мускавран телефон тӑрӑх Бердйански райком ҫекретарӗпе—Емец йулташпа калаҫнӑ.

„Родина“ самольотӑн чаплӑ екипажӗ йачӗпе Полинӑ Осипенко Бердйански районӗнчи ӗҫҫыннисене большевикла хӗрӳлӗ салам каланӑ тата хӑйӗн замльакӗсем самольот екипажӗшӗн тӑрӑшнӑшӑн чӗререн тавтунӑ.

Полинӑ Денисӑвнӑ Сталин йулташпа тата унӑн ҫывӑх соратникӗсемпе тӗл пулни ҫинчен каласа панӑ.

Бердйански районӗнчи ӗҫҫыннисем хӑнана пыма чӗннине ответлесе чаплӑ льотчица часах хӑйӗн земльакӗсем патне вӗҫсе пыма пулса сӑмах панӑ.

(ТАСС).

Колхозниксем ӗҫкунӗсем тӑрӑх аванс шучӗпе выльӑхсем илеҫҫӗ

Куҫса ҫӳрекен тата ҫурма куҫса ҫӳрекен районсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ хуҫалӑхра палла вырӑн йышӑнса тӑраҫ. Ялхуҫалӑх ертелӗн примерлӑ уставӗ тӑрӑх вӑл районсенчи кашни колхозник килӗ хӑй уса курма 4—5 ӗне, 30—40 сурӑх таран, пӗрер лаша тата тепрер шултра выльӑх усрама пултараҫ.

Уставра кӑтартнӑ тӑрӑх ӗҫлесе пырса, Чечемский районри (Кабардино-Балкар республикӗ) выльӑх чӗрлӗх ӗрчетекен колхозсем, государствӑна аш-какай тӑратас плана тултарнӑскерсем, колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх выльӑхсем аванс пама пуҫланӑ.

Ибрагим Гежгийӗв ҫемйи (Буденный йачӗпе тӑракан колхоз) 1.600 ӗҫкунӗ тунӑ, вӑл ҫемйене 22 сурӑх, пӗр ӗне, 160 килограм чакӑт, 7,5 тоннa йахӑн утӑ тата 529 тенкӗ укҫа панӑ.

Ельбрус районӗнчи „Красный Ельбрус“ ялхуҫалӑх ертелӗн членӗ Мурат Тилӑв 15 така, виҫӗ ҫулхи лаша тата 800 тенкӗ укҫа илнӗ.

Верхний Баксон ялӗнчи Мусукайӗв йачӗпе тӑракан ялхуҫалӑх ертелӗн кӑҫал чылай колхозникӗсем аванс шучӗпе 20-25-шер сурӑх тата ҫӑм нумай илеҫҫӗ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

ЦЕНТРТИ ФРОНТ. Испанин оборонӑ министерствин октябӗрӗн 27-мӗшӗнчи официаллӑ сводкинче ҫапла пӗлтернӗ: Харама секторӗнче (Мадридран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ йенче) октябӗрӗн 26-мӗшӗнче пӑлхавҫӑсемпе интервентсем, артиллерирен хайарран персе тӑвӑ хыҫҫӑн (вӑл вӑхӑтра пурӗ 4 пин снарйад ытла кӑларса йанӑ), Легана текен ҫӳлӗ вырӑн йеннеле тата Сиемпосуелос патӗнчен кӑнтӑр йенче Мадридран Андалузине кайакан чи пысӑк ҫул ҫинеле атакӑсем тунӑ. Ҫав атакӑсене республикӑ ҫарӗсем чаплӑн ҫӗмӗрса тӑкнӑ, фашиссене калама ҫук пысӑк тӑкаксем кӳнӗ. Ҫӗрле тата октябӗрӗн 27-мӗшӗнче ирхине ирех пӑлхавҫӑсемпе интервентсем каллех темиҫе хутчен атакӑ тунӑ, анчах вӑл атакӑсене те республиканӗцсем ҫавӑн пекех ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем ҫук.

* * *

Октябӗрӗн 27-мӗшӗнче Италин виҫӗ моторлӑ 5 самольочӗ Валенсин ҫыран хӗрринчи кварталӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсенчен нумайӗшӗ тинӗсе ӳкнӗ. Кӑнтӑр тӗлнеле «Совойиа» системӑлӑ икшер моторлӑ 16 бомбардировщик Валь де Уксо тата Чилчес ялӗсем ҫине (Сагунторан ҫурҫӗр йенче) бомбӑсем пӑрахнӑ. Бомбӑсем тивнипе 14 ҫын вилнӗ тата 52 ҫын аманнӑ.

(ТАСС).

Испани делегацийӗ Мускава Октябӗр уйавне иртерме килет

БАРСЕЛОНА, октябӗрӗн 28-мӗш. ССР Сойузӗнчи пролетарилӗ аслӑ революци 21 ҫул тултарнине уйавлама Мускава килекен Испани делегацийӗн членӗсем Совет Сойузне килме тухас умӗн радио тӑрӑх сӑмах каланӑ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗнче Совет Сойузӗ Испани республикне тӑванла пулӑшнине тата йуратнине Испани халӑхӗ нихӑҫан та манманни ҫинчен каланӑ. Унтан делегаци членӗсем Испани халӑхӗн социалисӑм ҫӗршывӗн ҫитӗнӗвӗсене тӗплӗн вӗренмеле, тесе каланӑ.

(ТАСС).

Ҫессӗ решенисене ӑнлантарсан

КАНАШ. ССР Сойуз Верховнӑй Совечӗн II-мӗш Ҫессӗ решенисене ӑнлантарнӑ хыҫҫӑн районра колхоза кӗрекенсен йышӗ ӳсрӗ. Йулашки вӑхӑтра 443 йединоличник хуҫалӑхӗ колхоза кӗчӗҫ. Уйрӑмӑн илсен, Сухайкассинче 88 хуҫалӑх, Вӑтапуҫӗнче 62 хуҫалӑх, Кив Шелттемре 33 хуҫалӑх, Усырмара 30 хуҫалӑх кӗнӗ.

Г. Михайлӑв.

ЙЕЛЧӖК. Кӗҫӗн Тайапа ялӗнчен кӑҫал 18 ҫамрӑк Хӗрлӗ Ҫарретне кайрӗҫ. Призывниксем Хӗрлӗ Ҫара тухса кайас умӗн общӗствӑлӑ ӗҫсене активлӑн хутшӑнчӗҫ. Пӳринчен ытла призывник Александр Морозӑв йулташ тӑрӑшса ӗҫлерӗ, Вӑл йединоличниксене пухса ССР Сойуз Верховнӑй Совечӗн II-мӗш Ҫессӗ решенисене ӑнлантарса пачӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн виҫӗ йединоличник хуҫалӑхӗ колхоза кӗчӗҫ.

Й. Крылова.

Комсомолӗцсем чукунҫул строительствинче

Канаш-Шупашкар чукунҫулне Аслӑ Октябӗр уйавӗ тӗлне вӑхӑтлӑх експлоатацине памала тӑвассишӗн Шупашкар хулинчи комсомолӗцсем чукунҫул ҫине массӑлӑн ӗҫлеме тухаҫҫӗ.

Октябӗрӗн 28-мӗшӗнче хуларан 93 комсомолӗц ӗҫлеме тухрӗҫ. Ҫак комсомолӗцсем строительствӑна икӗ хӗрлӗ йалавпа хаваслӑ йурӑсем йурласа кайрӗҫ, вӗсене музыкӑпа ӑсатнӑ.

Хӑшпӗр комсомол организацисенчен уйрӑм бригадӑсем организацилесе тухнӑ. Авторемонтнӑй савӑтри 11 комсомолӗц хӑйсем пӗр бригадӑ организациленӗ.

Ил. Сидоркин.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боԓшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиссийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

V СЫПĂК

БОԓШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ПĔРРЕМĔШ ИМПЕРИАЛИСĂМЛĂ ВĂРÇĂ УМĔН РАБОЧИСЕН ЙУХĂМĔ ÇĔКЛЕННĔ ÇУЛСЕНЧЕ.

(1912—1914 ÇУЛСЕМ).

1. 1912—1914 çулсенче революцилĕ йухăм çĕкленни.

Столыпинла реакци алхасни нумайа пыман. Халăха чăпăркка тата çакса вĕлермелисемсĕр пуçне урăх нимĕн те пама шутламан правитĕлстві çирĕп пулма пултарайман. Репреççисем çав тери йалан пулса, пынă пирки, вĕсем халăха хăратма та пăрахнă. Рабочисем ывăнса çитни пĕте пуçланă, вĕсем ывăнни революци парăннă хыççăн малтанхи çулсенче сарăлнă пулнă. Рабочисем çĕнĕрен кĕрешĕве çĕкленме пуçланă. Çĕнĕ революцилĕ çĕкленӳ пурпĕрех пулассине боԓшевиксем малтанах курса тăни тĕрĕс пулнă. 1911 çултах та ĕнтĕ стачечниксен хисепĕ 100 пинрен иртнĕ, унччен малтанхи çулсенче вĕсен хисепĕ пĕтĕмпе те 50—60 пин çын çеç пулнă. Партин 1912 çулти йанварте пулса иртнĕ Прагăри конференцийĕх ĕнтĕ рабочисен йухăмĕнче хускану пуçланнине палăртса хăварнă. Анчах революцилĕ йухăмăн чăн-чăн çĕкленĕвĕ 1912 çулти апрел-май уйăхĕсенче пуçланат, çав вăхăтра Ленă шывĕ çинче рабочисене персе пăрахнă майпа массăлă политикăлă стачкăсем сиксе тухнă.

1912 çулти апрелĕн 4-мĕшĕнче Çĕпĕрте Ленă шывĕ çинчи ылттăн кăларакан вырăнта стачкă пулса иртнĕ вăхăтра, патша жандармерин офицерĕн приказĕ тăрăх 500 рабочине ытла вĕлернĕ тата амантнă. Ленă шывĕ çинчи шахтăрсен администрацийе мирлĕн калаçма кайакан хĕçпăшалсăр ушкăнне персе пăрахни пĕтĕм çĕршыва хумхатса йанă. Патша самодержави çак йунлă тискер çĕнĕ ĕçе Ленă шывĕ çинчи ылттăн кăларакан вырăнсен хуçисене—Англи капиталисĕсене йурас, шахтăрсен економикăлă забастовкине çапса хуçас шутпа тунă. Англи капиталисĕсем тата вĕсен вырăс компаԓйонĕсем рабочисене пĕр намăссăр експлуатацилеиипе Ленă шывĕ çинчи ылттăн вырăнĕсенчен питĕ пысăк тупăшсем çулсерен 7-шер мĕлйун тенкĕ ытла илсе тăнă. Вĕсем рабочисене ĕçукçи калама çук сахал тӳленĕ, вĕсене ниме йурăхсăр, çĕрсе кайнă продуктăсем çитернĕ. Хĕсĕрленисене тата мăшкăланисене чăтаймасăр, Ленă шывĕ çинчи ылттăн вырăнĕсенчи 6 пин рабочи забастовка пуçласа йанă.

Ленă çинчи рабочисене персе пăрахнине хирĕç, пролетариат Петербургра, Мускавра, промышлĕннăçлă центрсемпе районсенче пуринче те массăлă забастовкăсем, демонстрацисем, митингсем туса ответленĕ.

„Епĕр çав тери тĕлĕнсе хытса кайнипе тата тарăхса çитнипе çийĕнчех йурăхлă сăмахсем те тупаймарăмăр. Епĕр хутте мĕнле хирĕçлесе пĕлтерсен те, вăл пиртен кашни чĕтса иртернĕ ăшри хусканăвăн вайсăр мĕлки çеç пулнă пулĕччĕ. Пире нимĕн те пулăшмаст: куççулсем те, хирĕçленисем те, пĕр организацилĕ массăлă кĕрешӳ çеç пулăшат", —çапла çырнă предприйатисен пĕр группинчи рабочисем хăйсен резоԓуцийĕнче.

Ленă çинчи рабочисене персе пăрахни пирки Государственнăй думăри социал-демократла фракци ыйтса пĕлни çине патша министрĕ Макарăв: „Çапла пулнă тата çаплах пулат!" тесе ответленĕ хыççăн, рабочисен тăвăллă ылханăвĕ тата та ытларах вăйлăланса кайнă. Ленă çинчи рабочисене йун айне тунине хирĕçлесе тунă политикăлă стачкăсене хутшăннисен хисепĕ 300 пине çити ӳснĕ.

Ленă çинчи кунсем Столыпин режимĕ туса хунă „лăпкăлăх" атмосферине вăйлă çил-тăвăл пек пырса кĕнĕ.

Акă мĕн çырнă Сталин йулташ çакăн пирки Петербургри боԓшевикла „Звезда" хаçатра 1912 çулта:

„Ленă çинчи пăшал сассисем чĕмсĕрлĕх пăрне çĕмĕрчĕç, вара халăх йухăмĕн йухан шывĕ тапранчĕ. Тапранчĕ!.. Кучухнехи режимра усалли тата ирсĕрри мĕн пулнă, нумай асап курнă Российă мĕнпе чирленĕ—çавсем пурте пĕр фактра, Ленă çинчи событисенче пухăннă. Акă мĕншĕн шăпах Ленă çинчи пăшал сассисем забастовкăсемпе демонстрацисен çигналĕ пулса тăчĕç".

Ликвидатăрсемпе троцкиссем революци вилнĕ тесе ăна ахалех пытарма хăтланнă. Ленă çинчи событисем революцилĕ вăйсем чĕррине, рабочи класра революцилĕ пысăк вăй-хăват пухăнса çитнине кăтартнă. 1912 çулти майăн пĕрремĕшĕнчи забастовкăсене 400 пине йахăн рабочи хутшăннă. Вăл стачкăсем йар уçă политикăлă характерлă пулнă, вĕсем демократилĕ республикă, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ, помешчиксен пĕтĕм çĕрĕсене конфискацилесси çинчен калакан боԓшевикла, революцилĕ лозунгсемпе иртнĕ. Çак тĕп лозунгсем рабочисен сарлака массисене пĕрлештерме кăна мар, çавăн пекех самодержавине хирĕç тапăнса пыма хресченсемпе салтаксене те пĕрлештерме кирлĕ пулнă.

„Пĕтĕм Российăри пролетариатăн май уйăхĕнчи питех те пысăк забастовкийĕ тата унпа çыхăнса пулнă урамсенчи демонстрацисем, революцилĕ прокламацисем тата рабочисен ушкăнĕсем умĕнче каланă революцилĕ сăмахсем Российă революцилĕ çĕкленӳ полоссине кĕнине уççăн кăтартса пачĕç", —тесе çырнă Ленин „Революционный под'ем" йатлă статйинче (Ленин, т. XV, стр. 533).

Рабочисен революцилĕхĕнчен шикленсе ӳкнĕ ликвидатăрсем стачкăсем туса кĕрешессине хирĕç тăнă, вĕсем çав кĕрешĕве „стачкăсемпе каçăхса кайни" тесе йат панă. Пролетариатăн революцилĕ кĕрешӳне ликвидатăрсемпе вĕсен сойузникĕ Троцкий „петицисен кампанийĕпе" улăштарасшăн пулнă. Рабочисене „правасем" çинчен (сойузсене, стачкăсене т. ыт. те) пӳлнине пăрахăçласси çинчен ыйтса хут çине, „петици" çине, алă пусма сĕннĕ, кайран вара ăна Государственнăй думăна йамала пулнă. Ликвидатăрсем 1300 çынна çеç алă пустарма пултарнă, çав вăхăтрах боԓшевиксем кăларса тăратнă революцилĕ лозунгсем тавра çĕршер пин рабочисем пĕтĕçнĕ.

Рабочи клас боԓшевиксем кăтартса панă çулпа пынă.

Вăл тапхăрта çĕршывра економикăлă обстановкă тĕлĕшĕнчен çакăн пек картинă пулнă.

Промышлĕннăç пĕр вырăнта тăни 1910 çултах ĕнтĕ промышлĕннăçăн тĕп отрăçлĕсенче производствă хусканса кайнипе, сарăлса пынипе улшăннă. 1910 çулта 186 мĕлйун пăт чукун, 1912 çулта—256 мĕлйун пăт шăратнă пулсан, 1913 çулта вара 283 мĕлйун пăт шăратнă. 1910 çулта çĕркăмрăкĕ 1.522 мĕлйун пăт туса кăларнă, 1913 çулта вара—2.214 мĕлйун пăта çитнĕ.

Капиталисăмлă промышлĕннăç ӳснипе пĕр вăхăтрах пролетариат та хăвăрт ӳссе пынă. Промышлĕннăç аталанăвĕн уйрăмлăхĕ вăл—пысăк тата чи пысăк предприйатисенче производствă малала концентрациленсе пыни пулнă. 1901 çулта 500 йе ытларах рабочилĕ пысăк предприйатисенче рабочисен пĕтĕм хисепĕнчен 46,7 проценчĕ ĕçленĕ пулсан, 1910 çулта вара çавăн пек предприйатисенче 54 процент, урăхла каласан, мĕнпур рабочисенчен çурри ытла ĕçленĕ. Промышлĕннăç çакăн пек нихçан та концентрациленсе пыман. Промышлĕннăç вăйлăн аталаннă çĕршывра та, Çурçĕрти Америкăра, вăл вăхăтра пысăк предприйатисенче пĕтĕм рабочисем виççĕмĕш пайĕ кăна ĕçленĕ.

Революцилĕ парти, боԓшевиксен партийĕ, пур чухне пролетариат пысăк предприйатисенче çакăн пек ӳсни тата пĕрлешсе тăни Российăри рабочи класа çĕршывăн политикăлă пурнăçĕн питĕ пысăк вăйĕ туса хунă. Предприйатисенче рабочисене варварла формăпа експлуатацилени патша опричникĕсен полицилĕ чăтма çук режимĕпе пĕрлешсе, кашни пысăк стачкăна политикăлă характерлă туса хунă, економикăлă тата политикăлă кĕрешӳсем пĕрлешсе кайни вара массăлă стачкăсене уйрăмăнах революцилĕ вăй панă.

Рабочисен революцилĕ йухăмĕн малти ретĕнче Петербургăн паттăр пролетариачĕ пынă, Петербург хыççăн Прибалтийски край, Мускав тата Мускав кĕпĕрни, унтан Поволожйĕ тата Российăн кăнтăр йенĕ пынă. 1913 çулта йухăм Хĕвеланăç крайне, Поԓшăна, Кавказа çаварса илет. 1912 çулта мĕнпурĕ официаллă отчотсем тăрăх—725 пин çын, тата ытти туллинрех пĕлтернисем тăрăх мĕлйун рабочи ытла забастовкă тунă, 1913 çулта официаллă отчотсем тăрăх—861 пин, тата ытти туллинрех пĕлтернисем тăрăх — 1.272 пин çын забастовкă тунă. 1914 çулăн малтанхи çурçулĕнче вара мĕлйун çурăна йахăн рабочисем стачкăсене хутшăннă.

Çапла ĕнтĕ, 1912—1914 çулсенчи революцилĕ çĕкленӳ, стачкăсен йухăмĕн анлăшĕ çĕршыва 1905 çулти революци пуçламĕшĕнчи обстановкă патне çывхартса пынă.

Пролетариатăн революцилĕ массăлă стачкисем пĕтĕм халăхшăн пысăк вырăн йышăнса тăнă. Вĕсем самодержавине хирĕç пулса пынă. Стачкăсене ĕççыннисен питех те пысăк пайĕ кăмăллăн йышăнса илнĕ. Рабочисем забастовкăсем тунине хирĕç фабрикантсемпе заводчиксем локаутсем туса тавăрнă. 1913 çулта Мускав кĕпĕрнинче капиталиссем 50 пин текстилщика урама кăларса ывăтнă. 1914 çулти март уйăхĕнче Петербургра пĕр кун хушшинче 70 пин рабочине ĕçрен кăларса йанă. Промышлĕннăçри ытти предприйатисемпе отрăçĕлсенчи рабочисем забастовкă тунă тата локаута пула ĕçрен тухса ӳкнĕ йулташĕсене массăлăн укçа пухса парса, хăш чухне солидарнăç забастовкисем тунипе пулăшнă.

Рабочисен йухăмĕ çĕкленни тата массăлă стачкăсем çавăн пекех хресченсен массисене те вăратнă, кĕрешĕве хутшăнтарса пынă. Хресченсем помешчиксене хирĕç кĕрешме çĕнĕрен çĕкленнĕ, помешчиксен именисене тата кулаксен хутăрĕсене пĕтерсе пынă. 1910—1914 çулсенче хресченсен 13 пин ытла выступленисем пулса иртнĕ.

Çарсенче те революцилĕ выступленисем пуçланса кайнă. 1912 çулта Туркестанри çарсем хушшинче хĕçпăшаллă выступлени пулса иртнĕ. Балти флотĕнче тата Севастопоԓре восстанисем хатĕрленсе пынă.

Боԓшевиксен партийĕ йертсе пынă революцилĕ стачкăлă йухăм тата демонстрацисем çакна кăтартса панă: рабочи клас хăшпĕр требованисемшĕн мар, „реформăсемшĕн" мар, патша йĕркинчен халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешет. Çĕршыв çĕнĕ революци патнеле пынă.

Российă çывăхнерех пулас тесе, Ленин 1912 çулта çулла Парижрен Галицине (Австрире пулнă) пурăнма куçнă. Кунта вăл председатĕл пулса йертсе пынипе Тĕпком членĕсен тата ответлă работниксен икĕ канашлăвĕ пулса иртнĕ: пĕри — Краковра 1912 çул вĕçĕнче тата тепри — 1913 çулта кĕркунне Краков патĕнчи Поронино йатлă вырăнта. Çак канашлусенче рабочисен йухăмĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсем тăрăх решенисем йышăннă: революцилĕ çĕкленӳ çинчен, стачкăсем тата парти задачисем çинчен, вăрттăн ĕçлекен организацисене çирĕплетесси çинчен, думăри социал-демократла фракци çинчен, парти пичечĕ çинчен, страховой кампани çинчен.

2. Боԓшевикла хаçат „Правда". IV Государственнăй думăри боԓшевикла фракци.

Боԓшевикла организацисене çирĕплетес тата массăсем çине влийани парассине çĕнтерсе илес ĕçре Петербургра кашни кун тухса тăнă боԓшевикла „Правда" хаçат боԓшевиксен парти аллинче хăватлă хĕçпăшал пулса тăнă. Ана Ленин кăтартса панă тăрăх, Сталин, Оԓминский тата Полетайĕв пуçарса пынипе тунă. Рабочисен массăлă хаçачĕ „Правда" революцилĕ йухăмăн çĕнĕ çĕкленĕвĕпе пĕрле çуралса тухнă. 1912 çулти апрелĕн 22-мĕшĕнче (çĕнĕ стилпе майăн 5-мĕшĕнче) унăн пĕрремĕш номĕрĕ тухнă. Ку вăл рабочисемшĕн чăн-чăн праçник пулнă. „Правда" пуçланса кайнине хисеплесе, майăн 5-мĕш кунне рабочи пичечĕн праçник кунĕ тесе шутлама йышăннă.

„Правда" хаçат тухиччен маларах малта пыракан рабочисем ваԓԓи боԓшевикла „Звезда" хаçат ернере пĕрре тухса тăнă. Ленă шывĕ çинчи событисен кунĕсенче „Звезда" питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Унта Ленинпа Сталинăн рабочи класа кĕрешĕве мобилизацилене политикăлă вирлĕ статйисем чылай пичетленнĕ. Анчах революцилĕ çĕкленӳ условийĕсенче боԓшевикла партишĕн ернере пĕрре тухса тăракан хаçат çителĕклĕ пулман. Рабочисен чи сарлака сийĕсем ваԓԓи кашни кун тухса тăракан массăлă политикăлă хаçат кирлĕ пулнă. Çавăн пек хаçат пулнă та ĕнтĕ „Правда".

Вăл тапхăрта „Правда" ролĕ калама çук пысăк пулнă. „Правда" рабочи класăн сарлака массине боԓшевисăм йенне çĕнтерсе илсе пынă. Хаçатра цензурăна килĕшмен статйасемпе корреспонденцисем пичетленĕшĕн полицисем пĕр чарăнмасăр хĕсĕрленĕ, штрафсем, конфискацисем туса пынă обстановкăра „Правда" малта пыракан вуншар пин рабочисем активлăн пулăшнипе кăна пурăнма пултарнă. Укçан хунă питĕ те пысăк штрафсене „Правда" рабочисем хушшинче сарлакан укçа пухнипе кăна тӳлеме пултарнă. Час-часах „Правдан" конфискациленĕ номĕрĕсен тиражĕн чылай пайĕ çапах та вулакансен аллине лекнĕ, мĕншĕн тесен малта пыракан рабочисем типографине çĕрлех пырса, хăйсемпе пĕрле хаçата пачки-пачкипе илсе кайнă.

Патша правитĕлстви икĕ çулсурă хушшинче „Правда"-на сакăр хутчен хупнă, нумай рабочисем пулăшнипе вăл ĕлĕкхи йеврĕлĕ çĕнĕ йатпа, сăмахран — „За правду", „Путь правды", „Трудовая правда" йатсемпе çĕнĕрен тухма пуçланă.

„Правда" вăтамран пĕр кунра 40 пин екземпԓар сарăлнă вăхăтра, меңшевиксен кашни кун тухса тăракан „Луч" хаçачĕн тиражĕ 15—16 пинрен те иртеймен.

Рабочисем „Правдана" хăйсен рабочи хаçачĕ тесе шутланă, ун çине пысăккăн шанса пăхнă тата унăн сассине тимлĕн итленĕ. „Правдан" кашни екземпԓарĕ, аларан алла куçса çӳресе, вуншар вулакансем патне çитнĕ, вĕсен класлă ăстăнне йĕркеленĕ, вĕсене воспитани панă, организациленĕ, кĕрешĕве чĕннĕ.

Мĕн çинчен çырнă „Правда"?

„Правдан" кашни номĕрĕнче рабочисен вуншар корреспонденцисем пичетленнĕ, вĕсенче рабочисен пурнăçĕ, тискер експлуатаци, капиталиссемпе вĕсен управԓайушчийĕсем тата маçтăрĕсем рабочисене тĕрлĕрен хĕсĕрлени тата мăшкăлани çинчен çырнă. Вĕсем пӳрте капиталисла йĕркесене çивĕччĕн те питĕ тĕл питлекен корреспонденцисем пулнă. Час-часах „Правдари" заметкăсенче ĕççĕр тăрса йулнă тата выçă пурăнакансем, ĕç тупас шанчăк çуккипе, хăйсене хăйсем вĕлерни çинчен çырса пĕлтернĕ.

„Правда" промышлĕннăçри тĕрлĕ хапрăксемпе отрăçĕлсенчи рабочисен нушисемпе требованийĕсем çинчен çырнă, рабочисем хăйсен требованийĕсемшĕн мĕнле кĕрешни çинчен çырнă. Кашни номĕрте пекех тĕрлĕ предприйатисенчи стачкăсем çинчен çырнă. Пысăк та вăрăма пыракан стачкăсем пулса иртнĕ вăхăтсенче хаçат промышлĕннăçăн ытти предприйатийĕсенчи, отрăçĕлсенчи рабочисене хăйсем хушшинче укçа пухнипе стачечниксене пулăшма организациленĕ. Хăшпĕр чухне стачкă фончĕсене вуншар пин тенкĕ пухăннă,—рабочисенчен нумайтарахăшĕ кунне мĕнпурĕ те 70—80 пус кăна илнине шута илсен, вăл хисеп çав вăхăтра питĕ пысăк суммă пулса тăнă. Çакă вăл рабочисене пролетарилĕ солидарнăçлă пулма тата пĕтĕм рабочисен интересĕсен пĕрлĕхне ăнланма воспитани панă.

Кашни политикăлă событи, кашни çĕнтерӳ туни йе парăнни пирки рабочисем „Правда" хаçата çырусем, саламсем, хирĕçленисем т. ыт. йанă. Хăйĕн статйисенче „Правда" рабочисен йухăмĕн задачисене вĕçне çитиех боԓшевикла пăхса çутатса пынă.

Уççăн тухса тăракан хаçат патша йĕркине сирпĕтсе антарма тӳррĕмĕнех чĕнме пултарайман. Туйса илмеле тĕртсе каласа çырмала пулнă, вĕсене ăнланулă рабочисем лайăх ăнланса массăсене ăнлантарса панă. Сăмахран, „Правдара" „пиллĕкĕмĕш çулăн тулли те ним чакарман требованийĕсем" çинчен çырнă чухне, рабочисем сăмах боԓшевиксен революцилĕ лозунгĕсем çинчен—патша йĕркине сирпĕтсе антарассишĕн, демократилĕ республикăшăн, помешчиксен çĕрĕсене конфискацилессишĕн, 8 сехетлĕ ĕç кунĕшĕн кĕрешмели лозунгсем çинчен пынине ăнланнă.

IV думăна суйлас умĕн „Правда" малта пыракан рабочисене организациленĕ. Либераԓнăй буржуазипе килĕшессишĕн, „столыпинла рабочи партишĕн" тăракансен—меңшевиксен предатĕлле позицине „Правда" тăрă шыв çине кăларса пынă. „Правда" рабочисене „пиллĕкĕмĕш çулăн ним чакарман требованийĕсем" майлă тăракансемшĕн, урăхла каласан, боԓшевиксемшĕн сасăлама чĕннĕ. Суйлавсем нумай сыпăклă пулнă. Малтан рабочисен пухăвĕсенче уполномоченнăйсем суйланă, унтан уполномоченнăйсем выборщиксене суйланă, выборщиксем вара думăна рабочи депутата суйланă çĕре хутшăннă. Суйлав кунĕ „Правда" выборщиксен-боԓшевиксен спискине пичетлесе кăларнă, рабочисене вĕсемшĕн сасăлама сĕннĕ. Палăртнă кандидатсемшĕн арĕслес хăрушлăх тăвас мар тесен, вăл спискă малтанах пичетлесе кăларма йураман.

„Правда" пролетариат выступленийĕсене организацилеме пулăшса пынă. 1914 çулта çуркунне Петербургра пысăк локаут пулнă вăхăтра, массăлă стачкă тума усăлă пулман чухне, „Правда" рабочисене ытти формăсемпе кĕрешме—савăтсенче массăлă митингсем, урамра демонстрацисем тума чĕннĕ. Ун çинчен хаçатра тӳррĕмĕнех çырма йураман. Анчах çак чĕнӳ Ленинăн мăнаçланмасăр йат панă „О формах рабочего движения" статйине вуланă ăнланулă рабочисемшĕн ăнланмала пулнă, Ленин статйинче хаԓхи вăхăтра стачкăна рабочисен йухăмĕн ытларах çӳлĕ формипе улăштарма кирли çинчен каланă, çакă вăл митингсем, демонстрацисем организацилеме чĕннине пĕлтернĕ.

„Правда" урлă боԓшевиксен вăрттăн революцилĕ ĕçне рабочисен массисене уççăн агитацилес тата организацилес ĕçпе çыхăнтарса пырасси çакăн пек пурнăçа кĕрсе пынă.

„Правда" рабочисен пурнăçĕ çинчен, рабочисен стачкисем тата демонстрацийĕсем çинчен кăна мар çырнă. „Правда" хресченсен пурнăçĕ, хресченсем выçă ларни, крепостниксем - помешчиксем хресченсене експлуатацилени, Столыпин „реформине" пула кулаксем-хуторйансем хресченсен лайăх çĕрĕсене çаратни çинчен тăтăшах çутатса пынă. „Правда" ăнланулă рабочисене йалта революци тумали вăйсем мĕнле нумай пухăнса çитнине кăтартса панă. „Правда" пролетариата 1905 çулти революци задачисене татса памаини, çĕнĕ революци тума кирли çинчен вĕрентнĕ. „Правда" вĕрентнĕ: çак иккĕмĕш революцире пролетариатăн чăн-чăн çулпуç, халăх руководителĕ пулса тухмала, унăн çак революцире вăйлă сойузник—революцилĕ хресченсем пулаççĕ.

Меңшевиксем пролетариата революци çинчен шухăшлама пăрахтарасшăн тăрăшнă. Меңшевиксем рабочисене çапла каланă: халăх çинчен, хресченсем выçă ларни çинчен, черносотĕнла помещиксем-крепостниксем пуç пулса тăни çинчен шухăшлама пăрахăр, „коалицисен ирĕклĕхĕшĕн" çеç кĕрешĕр, ун çинчен патша правитĕлствине „петици" парăр. Боԓшевиксем рабочисене çапла ăнлантарса панă: меңшевиксем çакăн пек революцирен пăрăнма, хресченсемпе сойуз тăвассинчен пăрăнма вĕрентни буржуази интересĕсемшĕн пулса пырат, рабочисем хăйсен йенне хăйсен сойузникĕ пулса тăракан хресченсене йавăçтарсан патша йĕркине пурпĕрех çĕнтереççĕ, меңшевиксем йеврĕлĕ усал пастырсене, революци тăшманĕсем вырăнне хурса, айаккала кăларса ывăтма кирлĕ.

Мĕн çинчен çырнă-ха „Правда" „Хресченсен пурнăçĕ" йатлă пайра?

Тĕслĕхшĕн 1913 çулта тухнă темиçе корреспонденцине илсе пăхар.

„Аграрное дело" йатлă корреспонденци Самартан çапла пĕлтернĕ: Бугуԓмин уйесĕнчи Новохасбулат йалĕнче отрубщиксене общчествăлă çĕре уйăрса панă чух çĕр виçекене хирĕç тăнăшăн айăпланакан 45 хресченсенчен чылайĕш пайне нумайлăха тĕрмене хупса лартмала тунă.

Псков кĕпĕрнинчен килнĕ питех те кĕске корреспонденци çапла пĕлтернĕ: „Псицă йалĕнчи (Завалйе станци çывăхĕнче) хресченсем стражниксене хирĕç хĕçпăшалпа кĕрешнĕ. Аманнисем пур. Хирĕçӳ салтавĕсем—аграрлă йĕркесĕрлĕхсем. Псицăна стражниксене илсĕ пынă; унтах вице-губернаторпа прокурор тухса кайнă".

Уфа кĕпĕрнинчен килнĕ корреспонденци хресченсен çĕрĕсене сутса пĕтерни çинчен, выçлăх йалти общчинăран уйăрăлса мали çинчен кăларнă саккун чесем çĕрсĕр тăрса йула вăйлатни çинчен пĕлтернĕ. Борисовкă йатлă хутăр. 27 кил, вĕсем 543 теçетин ак... çĕр тытса тăраççĕ. Выçлăх вăхăтĕнче 5 кил хуçисем 31 теçетин çĕре ĕмĕрлĕхех сутса йанă, кашни теçетиншăн 25—33-шер тенкĕ илнĕ, çав вăхăтрах çĕр 3—4 хут хаклăрах тăрат. Кунтах 7 килĕ 177 теçетин çĕре 6 çуллăха, çулсерен 12 процент тӳлеме пулса, кашни теçетинне 18—20-шер тенкĕне салука хунă. Халăх чухăн пурăннине тата асса кайнă процентсене шута илсен, шанчăклăнах çапла калама пулат: 177 теçетинран çурри ростовщик аллине куçмала, мĕншĕн тесен çав пысăк укçана 6 çул хушшинче парама кĕнисенчен çурри те тӳлесе пĕтерейĕ-и вара.

„Правдара" пичетленнĕ „Крупное помещичье и мелкое крестьянское землевладение в России" йатлă хăйĕн статйинче Ленин рабочисемпе хресченсене харампыр-помешчиксен аллинче мĕнле пысăк çĕр пуйанлăхĕсем тăнине питех те уççăн кăтартса панă. 30 пин шултра помешчиксен аллинче кăна 70 мĕлйун теçетина йахăн çĕр пулнă. 10 мĕлйун хресчен килĕсен те çĕр çавăн чухлĕ çеç пулнă. Кашни шултра помешчикĕн вăтамран 2 300 теçетин пулнă, кашни хресчен килне, кулаксен килĕсене те шутласан,—вăтамран 7 теçетин тивнĕ, çав вăхăтрах 5 мĕлйун вăйсăр хуçалăхлă хресченсем, урăхла каласан, мĕнпур хресченсен çуррийĕ пĕр кил пуçне пĕр-икĕ теçетинран та ытла мар çĕр тытнă. Çак фактсем хресченсен чухăн пурнăçĕн тата выçă ларнин сăлтавĕ помешчиксем хăйсен аллинче питĕ нумай çĕр тытса тăнинче, крепостничествă йулашкийĕсенче пулнине уççăнах кăтартса панă, вĕсенчен хресченсем рабочи клас йертсе пыракан революци урлă кăна çăлăнма пултараççĕ.

Йалпа çыхăннă рабочисем урлă „Правда" йалсене саланнă, малта пыракан хресченсене вăратса революцилĕ кĕрешĕве çĕкленĕ.

„Правдана" туса хунă тапхăрта вăрттăн ĕçлекен социал-демократла организацисем пĕтĕмпех боԓшевиксен аллинче пулнă. Организацисен уççăн ĕçлекен формисене —думăри фракцине, пичете, страховой кассăсене, профсойузсене—меңшевиксенчен пĕтĕмпех çĕнтерсе илмен пулнă-ха. Рабочи класăн уççăн ĕçлекен организацисенчен ликвидатăрсене хăваласа кăларассишĕн боԓшевиксем татаклăн кĕрешни кирлĕ пулнă. Çак кĕрешӳ, „Правда" хаçата пула, ăнăçлăн пулса иртнĕ.

„Правда" партилĕхшĕн, рабочисен революцилĕ массăлă партине çĕнĕрен туса çирĕплетессишĕн пынă кĕрешӳн тĕп центрĕнче тăнă. „Правда" боԓшевиксен партин вăрттăн ĕçлекен вучахĕсем тавра уççăн ĕçлекен организацисене пĕтĕçтерсе пынă тата рабочисен йухăмне пĕр паллă тĕллев патне—революци хатĕрлесси патне çул кăтартса пынă.

„Правдан" рабочи корреспондентсем питĕ нумай пулнă. Пĕр çул хушшинче кăна унта 11 пин рабочисен корреспонденцийĕсем пичетленнĕ. Анчах „Правда" рабочисен массисемпе çырусем тата корреспонденцисем урлă кăна мар çыхăнса пынă. Предприйатисенчи нумай йышлă рабочисем кашни кунах редакцине кĕре-кĕре тухнă. „Правда" редакцинче партин организацилĕ ĕçĕн чылай пысăк пайне туса пынă. Кунта партин вырăнсенчи йачейкисен представителĕсемпе тĕлпулусем тунă, кунта хапрăксемпе савăтсенчи партилĕ ĕç çинчен сведĕнисем килсе тăнă, кунтан партин Петербургри комитечĕпе Тĕп Комитетăн партилĕ директивĕсене пара-пара йанă.

Рабочисен революцилĕ массăлă партине çĕнĕрен туса çирĕплетессишĕн ликвидатăрсемпе икĕ çул çурă хушши çине тăрса кĕрешнипе, боԓшевиксем çакна тума пултарнă: 1914 çулти çулла тĕлне, боԓшевиксен партийĕ хыççăн, „правдисла" тактикă хыççăн Российăри активлă рабочисен пилĕк пайĕнчен тăватă пайĕ пынă. Ун çинчен, сăмахран, çак факт каласа панă: 1914 çулта рабочисен хаçачĕсем ваԓԓи укçа пухнă рабочисен мĕнпур 7 пин группинчен 5,600 группи боԓшевикла пичет ваԓԓи укçа пухнă, меңшевикла пичет ваԓԓи 1400 группă кăна

Малалли 3-мĕш страницăра

М А Л А Л И.

пухнă. Меньшевиксен ун вырăнне либераллăнăй буржуази тата буржуалă интеллигенци хушшинче „пуйан туссем" нумай пулнă, вĕсем меньшевикла хаçата тытса тăма кирлĕ укçа-тенкĕрен çуррине ...ла панă.

...ьшевиксене унчухне „прав... тесе чĕннĕ. „Правдапа" ...революцилĕ пролетариатăн ...арăвĕ ӳссе пынă, вăл ...ктăбĕрти социалисăмлă ...е туса иртернĕ. „Прав... вуншар тата çĕршер ...исем тăнă. Революци ...улсенче (1912—1914) ...ьшевикла партин çирĕп ..., çав никĕсе империа... тапхăрĕнче патша ...хĕсĕрленĕ пулсан та ...тарайман.

...çулти „Правда" — вăл ...лта большевисăм çĕнтер... ...кĕс хуни" (Сталин).

Партин пĕтĕм Российйăри тĕпĕр уççăн ĕçлекен органĕ вăл IV Государственнăй думăри большевикла фракци пулнă.

1912 çулта правителĕства IV-мĕш думăна суйламала тунă. Суйлавсене хутшăнассине пирĕн парти пысăк вырăна хунă. Думăри социал-демократла фракци тата „Правда" хаçат партишĕн пĕтĕм Российйă талккишĕнчи уççăн ĕçлемели тĕреклĕ тĕп пунктсем пулса тăнă, вĕсем урлă большевикла парти массăсем хушшинче хăйĕн революцилĕ ĕçне туса пынă.

Думăна суйланă чухне большевиксен партийĕ хăйне уйрăмăн, хăйĕн уйрăм лозунгĕсемпе тухнă, пĕр вăхăтрах правителĕства партийĕсене те тата либераллăнăй буржуазине те (кадетсене) çапса пынă. Суйлав кампанине большевиксем демократилĕ республика, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ, помешчиксен çĕрĕсене конфискацилес лозунгсемпе туса пынă.

IV думăна суйласси 1912 çулта кĕркунне пулса иртнĕ. Октăбĕрĕн пуçламăшĕнче правителĕства, Петербургра суйлав мĕнле пулса пынипе кăмăлсăр пулнăскер, чылай чи пысăк савăтсенче рабочисен суйлав прависене пăсма хăтланса пăхнă. Çавăн çине ответлесе, пирĕн партин Петербургри комитечĕ, Сталин йулташ сĕннипе чи пысăк предприйатисенчи рабочисене кĕркунлăх забастовкă тума чĕннĕ. Йавăр положенине кĕртсе ӳкернĕ правителĕствăн уступкăсем памала пулнă, вара рабочисем пухусенче кама суйлас тенĕ, çавсене суйлама май илнĕ. Рабочисен питĕ те пысăк нумайтарахăшĕ уполномоченнăйсемпе депутата памали Сталин йулташ çырнă „Наказшăн" сасăланă. „Петербургри рабочисем хăйсен рабочи депутатне панă наказ" 1905 çулăн татса паман задачисем çинчен аса илтернĕ.

„Епĕр шутлатпăр,—тенĕ „Наказра",—Российйă пулас массăллă йухăмсен умĕнхи вăхăтра пурăнать, тен, вăл йухăмсем пилĕкĕмĕш çултинчен те тарăнрах йухăмсем пулĕç... Çак йухăмсене ...çараканĕ, пилĕкĕмĕш çулхи ...кĕх, вырăс обшчĕствин ытла...х малта пыракан класĕ, вы...с пролетариачĕ пулать. Унăн ...йузникĕ пулма Российйăна крепостной йĕркерен ирĕке кăлармассишĕн чунтан интересленекен нумай асап курнă хресченсем кăна пултараççĕ".

„Наказ" çапла каланă: халăхăн малашнехи выступленийĕсем икĕ фронтпа—патша правителĕствине хирĕç те, çавнашкалах патша йĕркипе килĕшме тăрăшакан либераллăнăй буржуазине хирĕç те кĕрешес формăпа пулса пымала.

Рабочисене революцилĕ кĕрешĕве чĕнекен çак „Наказа" Ленин пысăк вырăна хунă. Рабочисем те хăйсен резолюцийĕсенче çак чĕнӳшĕн тăнине пĕлтернĕ.

Большевиксем суйлавсенче çĕнтернĕ, вара думăна Петербургри рабочисенчен Бадайĕв йулташа суйланă.

Рабочисем думăна халăхăн ытти сийĕсенчен уйрăмăн суйланă (рабочи кури тенĕскер). Рабочи курин 9 депутатĕнчен улттăшĕ большевиксен партин членĕсем пулнă: Бадайĕв, Петровский, Муранăв, Самойлăв, Шагăв тата Малиновский (кайран вăл провокатăр пулни палăрнă). Большевиксен депутачĕсем чи пысăк промышлĕннăçлă центрсенчен суйланнă, вĕсенче рабочи класăн $^4/_5$ пайĕнчен кайа мар рабочисем пулнă. Анчах хăшпĕр ликвидатăрсем рабочисенчен мар, урăхла каласан, рабочи кури тăрăх мар суйланнă. Çавăнпа та думăра 6 большевика хирĕç 7 ликвидатăр пулнă. Малтанах большевиксемпе ликвидатăрсем пĕрле думăра социал-демократла пĕр фракци туса хунă. Большевиксен революцилĕ ĕçĕнче чăрмантарса пынă ликвидатăрсене хирĕç çине тăрса кĕрешнĕ хыççăн, 1913 çулти октăбĕрте, большевиксен партин Тĕпкомĕ кăтартса панă тăрăх, депутат-большевиксем пĕрлешӳлĕ социал-демократла фракцинчен тухнă та, большевиксен хăйне уйрăм фракцине туса хунă.

Большевиксен депутачĕсем думăра революцилĕ сăмахсем тухса каланă, вăл сăмахсенче самодержави стройне тăрă шыв çине кăларса пынă, правителĕствăран рабочисене хĕсĕрлени çинчен, рабочисене капиталиссем етемле мар експлуатацилени çинчен каласа пама ыйтнă.

Вĕсем думăра çавăн пекех аграрлă ыйтупа та тухса каланă, хăйсен сăмахĕсенче хресченсене крепосник-помешчиксене хирĕç кĕрешме чĕннĕ, помешчиксен çĕрĕсене конфискацилессине тата вĕсене хресченсене парассине хирĕç тăракан кадетсен партине тăрă шыв çине кăларса пынă.

Большевиксем Государственнăй думăна 8 сехетлĕ ĕç кунĕ çинчен саккун пройекчĕ тăратнă, ăна, паллах, черносотĕнла думă йышăнман, çапах та вăл пройект агитацилĕ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Думăри большевикла фракци парти Тĕпкомĕпе, Ленинпа тачă çыхăну тытса пынă, унтан кăтартусем илсе тăнă. Фракцине Сталин йулташ Петербургра пурăннă вăхăтра тӳрремĕнех йертсе пынă.

Думăра ĕçленипе чарăнса тăмасăр, депутат-большевиксем думă тулашĕнче пысăк ĕçсем туса пынă. Вĕсем хапрăксемпе савăтсене кайса çӳренĕ, çĕршывăн рабочи центрĕсене докладсемпе кайнă, вăрттăн пухусем тăва-тăва иртернĕ, вĕсенче парти решенисене ăнлантарса панă, партин çĕнĕ организацийĕсене тунă. Депутатсем уççăн ĕçлессипе пытанса, вăрттăн ĕçлессине пултарулăн çыхăнтарса пынă.

пичечĕпе ытти уççăн ĕçлекен организацисем тĕлĕшпе те меньшевиксене айаккала каларса ывăтнă. Революцилĕ йухăма хутшăннă рабочи клас, меньшевиксене айаккала сирпĕтсе ярса, çирĕппĕн большевиксем тавра пĕтĕçсе пынă.

Çитменни çине тата меньшевиксем наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе панкрутсем пулса тăнă. Российйăн окраинăсенчи революцилĕ йухăм наци ыйтăвĕ тĕлĕшпе уççăн калакан программă ыйтнă. Анчах меньшевиксен, Бундăн никама та килĕшме пултарайман „культурăллă автономине" шутламасан, нимĕнле программă та пулман. Большевиксем кăна наци ыйтăвĕпе марксисла программă пулнă, ăна Сталин йулташăн „Марксизм и национальный вопрос" статйинче, Ленинăн „О праве наций на самоопределение" тата „Критические заметки по национальному вопросу" статйисенче çырса панă.

Меньшевиксем çапла парăннисен хыççăн, Августовски блок пур çĕвĕсем тăрăх та çуркаланма пуçланинчен нимĕн тĕленмелли те çук. Тĕрлĕ тĕслĕ елементсене пухса тунăскер, вăл большевиксем хыттă хĕссе пынине тӳсеймен, уйрăм пайсене саланма пуçланă. Большевиксене хирĕç кĕрешме туса хунă Августовски блок часах большевиксем çапнипе арканса кайнă. Малтан блокран впередовецсем (Богданăв, Луначарский тата ыт.) тухнă; унтан латышсем тухнă, кайран ыттисем саланса пĕтнĕ.

Большевиксемпе кĕрешнĕ çĕрте парăннă хыççăн, ликвидатăрсем II Интернационалран пулăшу ыйтнă. II Интернационал вĕсене пулăшнă. Большевиксене ликвидатăрсемпе „килĕштерес" ӳтĕмпе, „партире мир тăвас" ӳтĕмпе II Интернационал большевиксене ликвидатăрсен соглашательле политикине критиклеме пăрахма хушнă. Анчах большевиксем ним килĕшми пулнă: вĕсем оппортунистла II Интернационалăн решенийĕсене пăхăнман, нимĕнле уступкăсем те туман.

Большевиксем уççăн ĕçлекен организацисенче çĕнтерни ăнсăртлăх пулман тата пулма та пултарайман. Вăл большевиксен кăна марксисла теори, уçăмлă программă тата кĕрешӳсенче пиçĕхсе çитĕннĕ революцилĕ пролетарилле парти пур пирки кăна мар ăнсăртлăх пулман. Вăл тата большевиксен çĕнтерĕвĕ революцилĕ çĕкленӳ ӳснине кăтартса панă пирки ăнсăртлăх пулман.

Рабочисен революцилĕ йухăмĕ, çĕнĕ хуласемпе облăçсене çавăрса илсе, ытларах та ытларах сарăлса пынă. 1914 çул пуçламăшĕнче рабочисен стачкăсем лăпланма пуçламан кăна мар, йăлтах урăхла, çĕнĕ вăйпа сарăлса пыма пуçланă. Стачкăсем ытларах та ытларах çине тăрса пулса пынă, вĕсене ытларах та ытларах рабочисем хутшăннă. Йанварĕн 9-мĕшĕнче 250 пин рабочи забастовкă тунă, вĕсенчен 140 пинĕ—Петербургра. Майăн 1-мĕшĕнче çур миллийон çын ытла забастовкă тунă, вĕсенчен 250 пинĕ—Петербургра. Забастовкăсенче рабочисем нихçан пулман çирĕплĕх кăтартса пынă. Петербургри Обуххăв савăтĕнче забастовкă икĕ уйăх ытла пынă, Лесснер савăтĕнче виçĕ уйăха йахăн пынă. Петербургри чылай предприйатисенче рабочисене сийенлĕ йапаласемпе массăллăн чирлеттернĕ хыççăн, 115 пин рабочи забастовкă тата уй хыççăн демонстрацисем тунă. Йухăм малала ӳссе пынă. 1914 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче (ийулĕн пуçламăшĕнче те кӳртсен) мĕнпурĕ 1.425 пин рабочи забастовкă тунă.

Май уйăхĕнче Бакури нефт промышлĕннăçĕнчи рабочисен пĕтĕмĕшле забастовки пуçланнă, вăл хăй çине Российйăри пĕтĕм пролетариата çавăрăнтарса пăхтарнă. Стачкă организацилĕн пулса иртнĕ. Ийунĕн 20-мĕшĕнче Бакура 20 пин рабочисен демонстрацийĕ пулнă. Баку рабочийĕсене хирĕç полици питĕ хаяр мерăсем йышăннă. Рабочисене хĕсĕрленине хирĕçлесе тата Бакури рабочисемпе солидарнăçлă пулса, Мускавра стачкă пуçланнă, вăл ытти районсене те кучнă.

Ийулĕн 3-мĕшĕнче Петербургри Путиловски савăтра Бакури стачкă йачĕпе пухăннă митинг пынă. Полици рабочисем çине пăшалпа пенĕ. Петербургри пролетариат питех те вăйлăн хускалса çĕкленнĕ. Ийулĕн 4-мĕшĕнче партин Петербургри комитечĕ чĕннипе полицин ирсĕр ĕçĕсене хирĕçлесе 90 пин рабочи забастовкă тунă, ийулĕн 7-мĕшĕнче—130 пин, ийулĕн 8-мĕшĕнче—150 пин, ийулĕн 11-мĕшĕнче—200 пин рабочи забастовкă тунă.

Пур савăтсенчи рабочисем те пăлханнă, пур çĕрте те митингсем тата демонстрацисем пулса иртнĕ. Ĕç баррикадăсем тума пăхасси патне çитнĕ. Çавăн пекех Бакура Лодзьре те баррикадăсем тунă. Чылай вырăнсенче полици рабочисем çине пăшалпа пенĕ. Йухăма путарса лартма правителĕства „чрезвычайлă" мерăсем йышăннă, столицăра çар лагерĕ туса хунă, „Правдăна" хупнă.

Анчах çак вăхăтра сцена çине пĕтĕм тĕнчешĕн çĕнĕ вăй—империалисăмлă вăрçă сиксе тухнă,—вăл событисем мĕнле пулса пынине улăштармала пулнă. Шăпах ийулĕн революцилĕ событисем вăхăтĕнче Петербурга патшапа пулас вăрçă пуçланасси çинчен калаçма Франци президентĕ Пуанкаре килнĕ. Темиçе кунтанах Германи Российйăпа вăрçă тухни çинчен пĕлтернĕ. Патша правителĕстви вăрçăпа большевикла организацисене çĕмĕрсе тăкма тата рабочи йухăма путарса лартма усă курнă. Революци çĕкленĕвне пĕтĕм тĕнчери вăрçă чарса лартнă, патша правителĕстви çав вăрçăпа революцирен хăтăлма шутланă.

3. Большевиксем уççăн ĕçлекен организацинче çĕнтерни. Революцилĕ йухăм малала ӳссе пыни. Империалисăмлă вăрçă пуçланас умĕнхи вăхăт.

Большевиксен партийĕ çав тапхăрта пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕн пур формисене тата паларăмĕсене те кăтартулăн йертсе пынин образецĕсене кăтартса панă. Вăл вăрттăн ĕçлекен организацисем туса пынă. Вăл вăрттăн листовкăсем пичетлесе кăларнă. Вăл массăсем хушшинче вăрттăн революцилĕ ĕçсем туса пынă. Çапла пĕрлех вăл рабочи класăн уççăн ĕçлекен тĕрлĕ организацийĕсене ытларах та ытларах алла çавăрса илсе пынă. Парти профсойузсене, халăх çурчĕсене, каçхи университетсене, клубсене, страховой учрежденисене çĕнсе илме тăрăшнă. Çак уççăн ĕçлекен организацисем тахçантанпах ликвидатăрсем вырнаçнă вырăн пулнă. Большевиксем уççăн ĕçлекен обчĕствăсене пирĕн партин опорлă пункчĕсем туса хурассишăн хаслăрлă кĕрешӳ пуçарса йанă. Уççăн ĕçлессипе вăрттăн ĕçлессине питех те пултарулăн çыхăнтарса пырса, большевиксем столицăсенче йиккĕшĕнче те професçилĕ пĕрлешӳсен нумайтарахăшне хăйсен йенне çĕнтерсе илнĕ. Уйрăмăнах 1913 çулта Петербургри металлиссен сойузĕн правленине суйланă чухне большевиксем питĕ чаплă çĕнтерӳ тунă: пухура 3 пин металлисран аран-аран 150 çын ликвидатăрсемшĕн сасăланă.

Çавнах каламала çакăн пек уççăн ĕçлекен организаци çинчен—IV Государственнăй думăри социал-демократла фракци çинчен те. Меньшевиксен думăра 7 депутат, большевиксен вара 6 депутат çеç пулнă пулин те, меньшевиксен пуринчен ытла рабочилĕ мар районсенчен суйланнă 7 депутачĕсем аран-аран рабочи класăн $^1/_5$ пайĕн представителĕсем пулкаланă, çав вăхăтрах большевиксен 6 депутачĕсем, çĕршывăн промышлĕннăçлă тĕп центрĕсенчен суйланнăскерсем (Петербург, Мускав, Иваново-Вознесенск, Кострома, Йекатеринослав, Харькăв), çĕршыври рабочи класăн $^4/_5$ пайĕн представителĕсем пулса тăнă. Рабочисем хăйсен депутачĕсем тесе 7 депутата мар, 6 депутата (Бадайĕв, Петровский, тата ыт. те) шутланă.

Большевиксем уççăн ĕçлекен организацисене çакăн пирки çĕнтерсе илме пултарнă: вĕсем, патша йĕрки тискеррĕн хĕсĕрленине тата ликвидатăрсемпе троцкиссем тулланине пăхмасăр, вăрттăн ĕçлекен партине тата хăйсен речĕсенчи çирĕп дисциплинăна сыхласа хăварма пултарнă, рабочи класăн интересĕсене çирĕппĕн хӳтĕленĕ, массăсемпе тачă çыхăнса тăнă тата рабочисен йухăмĕн тăшманĕсемпе пĕр килĕшмесĕр кĕрешсе пынă.

Çапла вара, уççăн ĕçлекен организацисенче большевиксем пур йенпе те çĕнтерсе пынă, меньшевиксем пур йенпе те парăнса пынă. Думă трибунĕ çинчен агитаци тăвассиче те, çавăн пекех рабочи

КĔСКЕ ВЫВĂДСЕМ

Революцин çĕнĕ çĕкленĕвĕн çулĕсенче (1912—1914) большевиксен партийĕ рабочисен йухăмĕн пуçĕнче тăрса, ăна большевикла лозунгсемпе çĕнĕ революци патне илсе пынă. Парти вăрттăн ĕçлессине уççăн ĕçлессипе çыхăнтарса пырассине пурнăçа кĕртме пултарнă. Ликвидатăрсем тата вĕсен тусĕсем—троцкиссемпе отзовиссем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, парти уççăн пыракан йухăмăн пур формисене те алла çавăрса илнĕ тата уççăн ĕçлекен организацисене хăйĕн революцилĕ ĕçĕн опорлă пункчĕсем туса хунă.

Рабочи класăн тăшманĕсемпе тата вĕсен рабочисен йухăмĕнчи агĕнчĕсемпе кĕрешсе пырса, парти хăйĕн речĕсене çирĕплетнĕ тата хăй рабочи класпа çыхăнса тăрассине анлăлатнă. Революцилĕ агитаци тума думă трибунипе сарлакан усă курса тата рабочисен питех те пахха массăлă хаçатне „Правдана" туса хурса, парти революцилĕ рабочисен çĕнĕ ăруне—правдиссене вĕрентсе ӳстернĕ. Рабочисен çак сийĕ империалисăмлă вăрçă çулĕсенче интернационалисăмпа пролетарилĕ революци йалавне çирĕппĕн тытса пынă. Вăлах кайран, 1917 çулти Октăбĕрти революци кунĕсенче большевиксен партин чăмăрĕ пулса тăнă.

Империалисăмлă вăрçă умĕн парти рабочи класăн революцилĕ выступленийĕсене йертсе пынă. Вĕсем, империалисăмлă вăрçă пирки чарăннăскерсем, анчах кайран, виçĕ çултан, çĕнĕрен пулма пуçланнăскерсем, патша йĕркине сирпĕтсе антарассишĕн пынă авангардлă çапăçусем пулнă. Империалисăмлă вăрçăн йавăр полосине большевиксен партийĕ пролетарилĕ интернационалисăмăн йалавĕсене анлăн сарнипе пырса кĕнĕ.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Производствăлă çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç

ÇĔМĔРЛЕ. Предприйатисенчи комсомолĕцсемпе çамрăксем ПСÇЛКС XX çул тултарнине тăван çĕршыв-аннемĕр валли хаклă парнесем хатĕрленипе кĕтсе илчĕç. Комбинатăн столярнăй цехĕнчи комсомолĕц-стахановĕц И. Афонин йулташ кулленхи нормăна 135 процентран кайа мар тултарма, ПВХО, ГТО значокĕсем нормисене пама обйазателĕства илнĕччĕ. Хăйĕн обйазателĕствине вăл чыслăн пурнăçа кĕртрĕ. Кулленхи нормăна хал 163 процент таран тултарса пырать, ПВХО, ГТО значокĕсен нормисене пачĕ. Афонинпа пĕрле ĕçлекен çамрăксенчен 5 çын комсомол членне кĕме зайавлени пачĕç. Çавăн пекех Е. Агафонăва комсомолка та хăйĕн обйазателĕствине лайăх пурнăçларĕ. Кулленхи нормăна 260 процент таран тултарать, 2 хĕрачана комсомол ретне кĕме хатĕрлерĕ. Производствăра стахановла ĕçленипе пĕрлех Агафонăва йулташ каçхи вăтам шкулта 8-мĕш класра вĕренет.

„Большевик" савăтри комсомолĕцсемпе çамрăксем те йубилейа производствăра пысăк çĕкленӳ тунипе кĕтсе илчĕç. Урапа цехĕнчи çамрăк стахановĕц Йеремейĕв йулташ бригади сменăри нормăна 200—300 процент тултарса ĕçлет.

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнине пĕтĕм халăх пысăк хаваслăхпа кĕтсе илет. Ĕнер „Большевик" савăтăн клубĕнче район центрĕнчи комсомолĕцсемпе çамрăксен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Хар. Лисин.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Партилĕ-политикăлла ĕçе вăйлатни кирлĕ

Кивĕ руководствăра пулнă тăшмансем промышлĕннăç, йалхуçалăх, культурă строителĕствине планлас ĕçре сахал мар сăтăр тунă. Вĕсем Госплан аппарачĕсене тăшманла елементсене лартса пынă, вĕсен ĕçĕсене витсе тăнă. Критикăпа самокритикăна пусарнă. Партипе совет правителĕствин чи кирлĕ решенийĕсене пурнăçа кĕртмесĕр хăварас политикăна тытса пынă.

Госплан аппаратĕнче ĕçлеме работниксене политикăлла тата ĕçри пултарулăха кура мар, çемйелĕх тăрăх суйласа илнĕ. Партири тата партире тăман большевиксене ĕçе лартассине чарса пынă. Партилĕ-политикăлла ĕçе йапăхтарса йанă.

Çавăнпа та Госпланри пуçламĕш парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕнче парторг ĕçне çителĕксĕр тесе хак панă.

Ку пуху пулнăранпа чылай вăхăт иртрĕ. Парторганизаци ĕçне урăхлатса çĕнетме пур майсем те пулнă. Анчах Госплан çумĕнчи парторганизацинче тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕç питĕ йерипен пырать. Парторганизаци ку ĕçе пуçарса пымасть. Аппарата комплектласа çитермен. Пĕтĕмпе 7 çын çитмест. Йалхуçалăх секторĕнче пĕр çын çеç ĕçлет, 7 районра райплан председателĕсем çук. Госплан аппарачĕ пайанхи кунччен çителĕксĕр ĕçлесе пырать. „Госплан аппарачĕпе партипе правителĕства лартнă задачăсене пурнăçлама йавăр", тет Госплан председателĕ Андрейĕв йулташ. Çав вăхăтрах çĕнĕрен ӳссе çитĕннĕ çынсене аппарата ĕçлеме лартма тăрăшни çук.

Пуçламĕш парторганизаци отчотпа суйлав пухăвĕ хыççăн та партилĕ-политикăлла ĕçе вăйлатман. Чылай коммуниссем вĕренмеççĕ, çынсене те вĕрентмеççĕ. ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă хыççăн агитаци ĕçне çирĕплетес вырăнне, ку ĕçе йухăнтарса йанă. Агитколлективă йертсе пыракан çук.

Парторганизаци комсомол организацине йертсе пымасть. Коммуниссенчен чылайĕшĕ комсомол организаци мĕнле ĕçлени çинчен пĕлмеççĕ. Парторганизаци комсомол организацине пулăшасси çинчен 1938 çулта пĕрре те сӳтсе йавман.

Госплан аппаратĕнче служăшчисем сахал мар. Кунта аслă шкултан вĕренсе тухнисем чылай. Чылай служăщчисем вĕренсе хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене хăпартасшăн. Парторганизаци вĕсене илтмест. Кунта лекци, доклад, уйрăм калаçусем çинчен тахçанах маннă. „Партилĕ-политикăлла ĕçе йĕркелеме вăхăт çук", тет парторг Кавкин. Хомский коммуниса профсойуз членĕсен пухăвĕнче доклад туса пама хушнă.—Манăн доклад тума вăхăт çук, тесе вăл та доклада туса паман.

Кунта парторганизаци ӳсмест. 1938 çулта пĕр çынна кăна парти ретне илнĕ. Парторганизаци çумĕнче пĕр сочувствуйушчи те çук. Парти пухăвĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе пымаççĕ. Августăн 9-мĕшĕнче парти пухăвĕнче партилĕ пропагандă ĕçĕ çинчен сӳтсе-йавнă. Решенине октăбĕрĕн 10-мĕшĕнче тин йышăннă. Стена хаçачĕ ийуль уйăхĕнченпе тухмасть. „Епĕ сана тивместĕп, есĕ те мана ан тив"—çакăн пек принциппа ĕçлени пур кунта, ахальтен мар ĕнтĕ Госпланра пулнă тăшмансене пуçламĕш парторганизаци мар, çулти оргăнсем тăрă шыв çине кăларнă.

Пурне те паллă, тăшмансем хуçалăх тата культурă строителĕствине планлас ĕçре чылай сăтăр тунă. Çак сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн, хĕсĕнсе йулнă тăшмансен кайашĕсене тĕппипех тăпăлтарасси-пуçламĕш парторганизацин вирлĕ задачи пулать. Çак задачăна пурнăçлама кунта партилĕ-политикăлла ĕçе тĕпренех лайăхлатни кирлĕ.

П. Перлов.

Çитменлĕхсене пĕтерессипе куллен ĕçлемеле

ТРАК. Октăбĕрĕн 19-мĕшĕнче районти парторганизацин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцин решенисем çинчен сӳтсе-йаврĕ. Пренире каласма 26 çын çырăннă. Вĕсенчен 25-шĕ тухса каларĕç. Тухса калакансем Обком çекретарĕсенче ларнă двурушниксем—Петровпа Иванов халăх тăшманĕсене ответлă вырăнсене лартнине, вĕсене сăтăрла ĕçсем туса пыма йулашки вăхăтченех май панине палăртрĕç. Çавăн пекех вĕсем ПСК(б)П райкомĕн çитменлĕхĕсем çинчен те хытă каларĕç.

Районра 6 пуçламĕш парторганизаци. Отчотпа суйлав пухăвĕсенче 3 организаци ĕçĕсене çителĕксĕр тесе йышăннă. Вĕсен ĕçĕсене вăйлата сипе ПСК(б)П райкомĕ нимех те туман. 42 çынна парти ретне илнĕ хыççăн лăпланса ларнă. Хальхи вăхăтра районĕпе 1200 комсомолĕц шутланать. Вĕсенчен партине кĕме комсомол райкомĕ 37 комсомолĕца рекомендаци панă. Анчах парти райкомĕ 24 зайавленине çеç пăхса тухнă. Комсомол пуçламĕш организацисене пулăшас тĕлĕшпе парти райкомĕпе уйрăм коммуниссем йапăх ĕçлеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ 23 пуçламĕш организацинче кăçалхи çул пĕр çынна та комсомола илмен.

Партилĕ-политикăлла ĕçсем çинчен „Коммунисăм çулĕпе" хаçат та сахал çутатать. Вăл хаçат критикăпа самокритикăна вăйлатас, парти ĕçĕнчи çĕнĕ опытсене сарас, хаçат ĕçне парти активĕпе уйрăм коммуниссене хутшăнтарас йенĕпе ытла та начар ĕçлесе пырать.

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерсе, ĕçре тата кăлла улшăнусем тăвассипе районти организацисем йапăх ĕçлеççĕ. Райçутĕç пайĕн айапĕпе кăçалхи çул хут вĕренмели ачасенчен 300 ача ытла шкула каймасăр йулнă. Хутла пĕлмен ваттисене вĕрентме тытăнман. Суту-илӳ ĕçне вăйлатас ыйтупа йатарласа районти парторганизаци пухăвĕ туса, тивĕçлĕ кăтартусем панă пулсан та, вăл ĕçсем малала каймаççĕ. Растратă хальхи вăхăтра 27 пин тенке çитнĕ. Чылай лавкасенче супăнь çук, хура çăкăр çителĕксĕр.

3-мĕш квартăлăн финанс планне район 12 процент çеç тултарнă.

Йалхуçалăх ĕçĕсенче те çитменлĕхсем нумай. Кĕрхи çĕртме планне 44 процент, трактăрсемпе сухалассине 60 процент çеç тултарнă. Авăн çапса тата клевĕре тасатса пĕтермен.

Государствăна тырă парассипе пуринчен ытла „Победа" колхоз кайа йулса пырать. Вăл тырă парассине 58 процент, натурплатă 2 процент тултарнă, кивçен илнĕ ссудăна пĕртте тавăрса паман, аш-какай парассине 11 процент кăна тултарнă.

Парторганизаци пухăвĕ вăйлă критикă сарса йанипе пулса иртрĕ, малала ĕçлемешкĕн çитменлĕхсене пĕтерме, XIX-мĕш партконференцин решенисене пурнăçлама конкретлă решенисем йышăнчĕ.

Г. Закамский.

Пуху самокритикăпа иртрĕ

ЙĔЛЧĔК. Октăбĕрĕн 20-мĕшĕнче Патрекелĕнчи „Осоавиахим" колхоз çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Отчотпа суйлав пухуне пурĕ 13 комсомолĕц пымала пулнă, 12 комсомолĕц кăтартнă вăхăтра çитрĕç. Комсорг ĕçĕсене туса пыма вăхăтлăха суйланă Воронцов йулташ пĕр сехет те 10 минут хушши отчот туса пачĕ.

Пренире 7 комсомолĕц тухса каларĕç. Комсомолĕцсем критикăпа самокритикăна пысăккăн сарса комсорг пулса ĕçленĕ Филимонăв йалти комсомол пуçламĕш организацин ĕçне салатса йарас патнех çитернине палăртрĕç.

Прени пĕтнĕ хыççăн комсорг ĕçне йапăх тесе хакларĕç. Унтан йалти комсомол организацийĕн ĕçне вăйлатма, политкружок занятийĕсемпе комсомол пухăвĕсене кăтартнă вăхăтра план тăрăх йĕркелĕ туса пыма, йалти çамрăк ачасемпе хĕрсем хушшинче ĕçлессине тата Осоавиахим ĕçне вăйлăлатма решени йышăнса хăварчĕç.

Гер. Иванов.

Парти историне вĕренме хатĕрленетпĕр

Парти историн Кĕске курсĕ тухни пире питĕ савăнтарчĕ. Сталин йулташ хăй хутшăнса çырнă çак хаклăран та хаклă кĕнеке комсомолĕцсемшĕн пысăк парне пулса тăрать. Комсомолĕцсем çак кĕнеке тăрăх хăйсене çуратса ӳстернĕ Ленин—Сталин партийĕн историйĕ тăрăх коммунисăм ĕçне вĕçне çитерме пултаракан паттăрсем пулма вĕренеççĕ.

Шĕнерпуçĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) вăтам шкулта вĕренекен комсомолĕцсем халь ПСК(б)П историн Кĕске курсĕн кăшни сыпăкне чăвашла вуласа пыраççĕ. Шкул дирекцийĕ те çак ĕçре пулăшса пырать. Парти историн Кĕске курсĕ чăвашла пичетленме пуçланă май дирекци вĕренекенсем валли 100 екземпляр „Чăваш Коммунĕ" хаçат çырăнса пачĕ. М. Çĕргейĕв.

Китай халăхĕ Йапони захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕре Китай хĕрарăмĕсем активлăн хутшăнаççĕ. ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн аманнă бойецĕсем вăрçăри çамрăк хĕрсем парнесем илсе пыраççĕ. („Пресс-клише“).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Октаберĕн 26-мĕшĕнче Китай çарĕсем Ухаңрен (Центр Китайра) тухса кайнă, тухса кайас умĕн çар обйекчĕсене пурне те тĕппипех пĕтерсе хăварнă. Йапони концеççине çунтарса йанă. Çитĕнсе çитнĕ арçынсем пурте çарпа пĕрле оборонăн çĕнĕ линийĕ çине куçнă. Китай çарĕсем малтанах хатĕрлесе хунă çĕнĕ позицисем çинче çирепленсе тăнă.

Ухаңри виçĕ хула—Хаңкоу, Хаңйан тата Учан—йалтах çунаççĕ. Йапонĕçсен тылĕнче Китай çарĕн отрйачĕсемпе партизансем çапăçусем сарса йанă.

Йанцзы йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕ çинче йапонĕçсем Деаң хули патĕнче малала куçма хăтланса пăхнă. Йапонĕçсем вĕлерекен газсемпе усă курнă пулсан та, китаецсем хулан ишелсе пĕтнĕ стенисем патĕнче алвĕççĕн штыксемпех çапăçнă хыççăн, йапонецсене кайала хăваласа йанă, вĕсене пысăк тăкаксем кÿнĕ.

Çурçĕр Китайра çапăçусем вăйланна. Чылай пунктсенче китайĕçсем наступлени пуçласа, чылай хуласене йапонĕçсенчен туртса илнĕ, халĕхи вăхатра Чахар провинцинчи пăха центра—Калгана туртса илессипе хăратаççĕ. Партизансен пĕр отрйачĕ Çуаңхуа йатлă пысăк хула çине наступлени туса пырать.

Хенаңăн çурçĕр йенчи пайĕнче Китай çарĕсем Цзийуаң хулине çĕнĕрен туртса илнĕ.

Шаңси центрĕнче партизансен пысăк отрйачĕ хăйулăн кĕрешет. Вăл отрйада арсеналри тата çĕркăмрăк шахтисенчи рабочисенчен организациленĕ. Кăнтăр Шаңсире пулса пыракан çапăçусенче партизансем йапонĕçсене пысăк тăкаксем кÿреççĕ. Йулашки кунсенче вăл районран Йапонин аманнă салтакĕсене 1.400 çын кăларса йанă.

* * *

Йапони самолĕчĕсем Китайăн халăх пуранакан пункчĕсем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахса çÿреççĕ. Санхуа хулинче (Гуанси провинцинче) йапонĕçсем вăтам шкул çине темиçе бомба пăрахнă. Йапонĕçсем Хунаңре Чжучжоу çине вут хыптарса йаракан бомбăсем пăрахнă. Вилнисемпе аманнисем темиçе çĕр çын шутланаççĕ. Хулара пушар сиксе тухнă.

(ТАСС).

★ ★

Чехословакири государствă средствисене перекетлес йенĕпе ĕçлекен парламент комиççийĕ йышăннă решенисем

ПРАГА, октаберĕн 28-мĕш. Государствă средствисене перекетлес тĕлĕшпе ĕçлекен Берон председател пулса йертсе пыракан парламент комиççийĕ тĕрлĕ решенисем йышăнна. Комиççи правительствăна çаксене тума хушнă: 1. Качча тухнă хĕрарăмсене халех пур ĕçрен те кăлармала (государства ĕçĕсенчен кăна мар, уйрăм çынсем патĕнчен те); 2. Государствă аппарачĕнче малтан ĕçленĕ служашчисене пенçи парассине чакармала; 3. Пенçионерсене пур категори тăрăх та чи сахал пенçи памалине палăртса хумала; 4. Государствă служашчисемпе пенçионерсене совместительствă йĕркипе ĕçленине чарса лартмала; 5. „Пражске новины“, „Прагер абендблат“ хаçатсене хупса лартмала тата пичетĕн ытти çавăн пек официаллă органĕсене (кунта „Прагер прессе“ хаçат пирки самах пырать пулмала, вăл хаçат нумай çулсем хушши Бенешĕн—Крофтăн тулашри политики майлă пулса ĕçленĕ, çавăнпа та йулашки вăхатра вăл хаçат çине тапăнса пыма тытăннă) реорганизацилеме тытăнмала.

(ТАСС).

Германин Америкăри шпионла центрĕн ĕçĕ пирки пухнă следстви материалĕсене вăрланă

НЬЙУ-ЙОРК, октаберĕн 27-ш. Прокурор Гарди пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: „Германин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штачĕсенчи шпионла центрĕн ĕçĕ пирки пухнă материалсем шутĕнчен ĕнер пит кирлĕ документсем вăрланă. Вăл документсем — çав шпионла центрăн преступленилĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан материалсем. Вăрланă документсем хушшинче—айăпланакан Румрих Джесси Джордан шпионка патне йанă сакăр çырун фотокопийĕсем. (Джордан шпионка халь Шотландире тĕрмере ларать). Вăл документсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене Англи влаçĕсем йатарласах йарса панă пулнă.

Çухалнă документсене шырас тупас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем тума пуçланă.

Амстердамри шахмăт турнирĕ

Нойаберĕн 5-мĕшĕнче Голланди столицинче Амстердамра пĕтĕм тĕнчери шахмат матчĕ—тĕнчери чи вăйлă 8 шахматис турнирĕ уçăлать. Турнирта выляканcем çаксем пулаççĕ: тĕнче чемпионĕ Алехин, тĕнче чемпионĕсем пулнă Капабланкă тата Ейве, совет гроссмейстерĕ-орденоносец Ботвинник, Америкă гроссмейстерĕсем Ржешевский тата Файн, Чехословаки гроссмейстерĕ Флор тата турнирти чи çамрăк шахматис, Естони гроссмейстерĕ 22 çулхи Керес.

Турнир результачĕсем Алехинпа пулмали матчра вылямали кандидат кам пулмалине палăртса парĕç. (Çак турнирта мала тухнă шахматисăн 1939 çулта тĕнче чемпионĕ йатне илес шутпа Алехинпа вылямала пулать).

Пурте пĕлеççĕ, Алехин тĕнче чемпионĕн йатне 1927 çулта илнĕ, вăл ун чухне Капабланкăна çĕнтернĕ. Унтан, 1935 çулта Ейве кĕтмен çĕртенех Алехина çĕнтернĕ. 1937 çулта Алехин Ейвене çĕнтерсе, каллех тĕнче чемпионĕ йатне выляса илнĕ.

Турнирта пулакан шахматиссем пĕрремĕш турне Амстердамра выляççĕ. Унтан вĕсем Голландири чи пысăк хуласенче пулаççĕ, вăл хуласенче те пĕрер тур выляççĕ.

Октаберĕн 27-мĕшĕнче ССРС гроссмейстерĕ Ботвинник йулташ Амстердама пырса çитнĕ.

(ТАСС).

Докладчиксем кайнă

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕ, Октабĕр уйавне хатĕрленнĕ май нойаберĕн 1-мĕшчен хулари хапрăк-савăтсенчи рабочисемпе служăшчисем, суту-илÿ работникĕсем, халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем хушшинче тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантарса пама 21 докладчик уйăрнă. Хула комитечĕ октаберĕн 26-че докладчиксене пухса инструктивлă канашлу туса ирттерчĕ. Çавнашкалах Октабĕр уйавĕн кунĕсенче Шупашкар хула комитечĕ парти активне хушшинчен хапрăк-савăтсене докладчиксем йарать.

Вл. Игнатйĕв.

Кинобазă çинчен

Çак кунсенче Уйкас Асламас йалĕнче Йетĕрнери кинобазăран килсе „Юность“ йатлă 7 пайлă картинă кăтартрĕç. Кино курма халăх питĕ нумай пуçтарăнчĕç. Анчах вĕсем кинокартинă йĕркелĕн кураймарĕç, мĕншĕн тесен лентă мĕн пĕтичченех татăлса пычĕ. Кино курма пынисем нимĕн ăнланса илеймесĕрех саланчĕç.

Йетĕрнери кинобазă йенчен çакăн пек ĕçсем час-часах пулаççĕ, анчах вăл хăйĕн ĕçĕн пахалăхне лайăхлатма тăрăшмасть. Çакăншăн колхозниксем тарăхаççĕ.

М. Павлăв.

Профсойузсен активĕн республикăри канашлăвĕнчен

Октаберĕн 27—28-мĕшĕсенче профсойуз активĕн Чăваш республикĕнчи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕн ĕçĕсем çинчен Чуриновский йулташ тунă доклада итлесе сÿтсе-йаврĕ.

Канашлун икĕ кун хушшинчи ĕçĕсем мĕн кăтартрĕç? Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕн историлĕ решенийĕсене пурнăçа кĕртсе Чăваш республикĕнчи профсойузсем хăйсен ĕçĕсене чылай лайăхлатнă. Йертсе пыракан профорганĕсем профсойуз членĕсен йышлă массипе çыхăну тытассине вăйлатнă, руководствăна çĕнĕ çынсене—Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшакан йулташсене лартнă. Профорганизацисен доброволец-активиссем пиншер çын пур. Çавăн пекех профсойуз организацисем социалльни страховани, ĕçе сыхлас, профсойуз членĕсен культурăпа йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес ĕçсене аванлатса пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ профсойуз организацисенчи хăйне майлă кризиса пĕтерес ĕç малала пынине лайăх кăтартать.

Анчах Чăваш республикĕнчи профсойуз организацийĕсем Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленумĕ кăтартса хăварнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр кĕрешеççĕ-ха. Çакна канашлура пулнă йулташсем тухса каланă сăмахсенчен лайăх курма пулать. Канашлура 35 çын тухса каларĕç. Вĕсем профсойуз организацисенчи, чи малтан, йертсе пыракан профорганĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

— Профорганĕсем профсойуз членĕсемпе çыхăну тытассине йĕркелесе çитерчĕç-и, вĕсем массăран уйăрăлса тăрассине пĕтерчĕç-и?—тесе ыйтать Плетнева йулташ (Улатăр р.). Çук, пĕтермен. Медсантруд работникĕсен сойузĕн Чăваш обкомĕ (председателĕ Çтепанăв йулташ) вырăнсенче çителĕксĕр йертсе пырать. Епĕр, вырăнсенче ĕçлекенсем, обком представителĕсене курманни çулталăк иртнĕ,—тет вăл.

Зуброва йулташ (Çĕмĕрле р.) обком представителĕсем 1937 çултанпа Çĕмĕрлене пыманни, обком вырăнсенчи ĕçсене сводкăсем тăрăх çеç пĕлни çинчен калать. Андрейĕв (Йĕпреç р.), Маркизăв (Улатăр р.), Синицын (Канаш р.), Устинăв (Куславкка р.) йулташсем йертсе пыракан профорганĕсем членсен анлă массипе тачă çыхăну тытас, вĕсен ыйтăвĕсемпе нушисене пĕлсе тăрса, çын çине сталинла пăхас тĕлĕшпе ĕçсем çителĕксĕр пынине кăтартса пачĕç.

Профсойуз ĕçне доброволец-активиссем пиншер çын хутшăнна. Завкомсенче, месткомсенче çĕнĕ кадрсем ĕçлеççĕ. Анчах вĕсене ĕçлеме вĕрентесси, большевикла воспитани парасси чылай сойузсенче çителĕксĕр пырать.

— Канаш районĕнче,—тет Синицын йулташ,—профорганизацине парти йенчен йертсе пыни çук. Кунта сойузсен райком, местком членĕсене вĕрентессине аса та илмеççĕ. Епĕр хамăр мĕнле шутлатпăр, çапла ĕçлетпĕр. Çакăн пекех Çĕмĕрле, Куславкка, Çĕрпÿ районĕсенче те профактива вĕрентессине, çĕнĕ кадрсене большевикла воспитани парассине организацилемен.

Канашлура тухса каланă йулташсем профсойуз организацисем рабочисемпе служăшчисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе çине тăрса кĕрешменнине кăтартрĕç.

Канашра, Улатăрта, Шупашкарта тата ытти хуласемпе йалсенче ĕççыннисене чи кирлĕ йапаласем: спичкă, супăнь, тăвар, сахăр, краççин çукки профсойуз организацисем суту-илÿ организацисен ĕçĕсене массăлă контроль тăвассине манăça хăварни çинчен калать. Çавăнпа та Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ профсойузсен магазинсен, лавкасен, столовăйсен, буфетсен ĕçĕсене çирĕп контроль тумала тесе йышăнни пĕчĕк ĕç мар, вăл политикăлă кăтарту, çыншăн сталинла тăрăшма хушакан документ.

Куславкка комбиначĕнчи завком председателĕ Çтепанăвă йулташ профсойуз организацисен халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандăсене пĕр чун хăвармиччен, вĕсен сăтăрлă ĕçĕсене пĕтерес тĕлĕшпе кĕрешес ыйтăва çивĕччĕн лартрĕ. Вăл Куславкка комбиначĕ хăйне туса хута йанăран варах, пĕрре те промфинплана тултарманни, комбинатра сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн большевикла кĕрешÿ çуккине, çак кĕрешĕве пуçарма комбинат директăрĕ тата Мускавра, Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссариатĕнче ларакан Нахамсон чăрмантарса пынине палăртать. Ытти предприйатисенче те, суту-илÿ организацисенче те сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерессишĕн татăклă кĕрешÿ пуçламала, ку ĕçре профсойузсен малти ретре пулмала, терĕç тухса калакан йулташсем.

Смирнов (Шупашкар хули), Воронцов (Çĕмĕрле р.), Йершов (Шупашкар хули) тата ытти йулташсем те профсойуз ченĕсем хушшинче культурăлă-массăлă, оборонă, хутпĕлменлĕхе пĕтерес, вырăнти контроль ĕçне вăйлатас ĕçсем çинчен каларĕç.

Тухса калакан йулташсем пурте тенĕ пекех профактивăн большевисăма—ПСК(б)П историне тĕплĕн вĕренме кирлине, профсойуз членĕсен сарлака массисене большевисăма вĕренсе алла илсе революцилĕ сыхăлăха хăпартма пулăшмалине хыттăн палăртрĕç.

Канашлура парти Обкомĕн секретарĕ Новикăв, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Сомăв йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем Чăваш республикĕнчи профсойузсем умĕнче тăракан конкретлă задачăсем çинче чарăнса тăчĕç.

Сталин, Шверник йулташсем патне саламлă телеграммăсем йанă, докладчикăн йулашки сăмахне итлесе резолюци йышăннă хыççăн, октаберĕн 28-мĕшĕнче çĕрле канашлу хупăнчĕ.

Таварçавăрнăш планне ытлашшипех тултараççĕ

Шупашкарти магазинсенче ĕçлекенсем хушшинче Октабĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Çимĕçсемпе сутă тăвакан 9-мĕш №-лĕ магазин аван ĕçлет. Магазин пуçлăхĕ—продавец Филатăв тата продавщицă Лашманăвă йулташсем виççĕмĕш кварталти таварçавăрнăш планне 138,1 процент тултарнă. Çентабĕр уйăхĕнче магазин 52 пин тенкĕлĕх тавар сутнă, план 35 пин тенкĕлĕх.

Çавăн пекех 14-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Александрăвă йулташ та суту-илÿ ĕçне паха йĕркеленĕ. Виççĕмĕш кварталта унăн 60 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă пулсан, вăл 72 пин тенкĕлĕх сутнă. Çентабĕр уйăхĕнче план тăрăх унăн 20 пин тенкĕлĕх сутмала пулнă, вăл 26.700 тенкĕлĕх сутнă.

Хуçалăх таварĕсемпе суту-илÿ тăвакан магазин та таварçавăрнăш планне йаланах тултарса пырать. Виççĕмĕш кварталта 300 пин тенкĕлĕх тавар сутмала пулнă, 374.400 тенкĕлĕх сутнă. Магазин пуçлăхĕ—Илйин, продавецсем—Черепухин тата Николайĕв тавар илекенсене лайăх пăхас тата таварçавăрнăш планне ăнăçлăн тултарас тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех 19-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Васильĕв тата 45-мĕш №-лĕ ларйок пуçлăхĕ Токарĕв йулташсем лайăх ĕçлекен стахановецсен ретĕнче тăраççĕ. Шупашкарти торг çиçтеминче ĕçлекен продавецсем суту-илÿ ĕçĕнче вĕсен примерĕпе усă кураççĕ. Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва вăйлатаççĕ.

И. Большаков.

★ ★

Суту-илÿ хыпарĕсем

** Октаберĕн 20-мĕшпе нойаберĕн 5-мĕшĕ хушшинче Чăвашсойуз йалпосене пусма таварсем, тутăрсем, ботинкăсем, çĕвĕ машинĕсем, велосипедсем пурĕ 1200 пин тенкĕлĕх йарса парать.

Октабĕр уйавĕ умĕн пулакан Шупашкарти йармăркăра Шупашкар торгĕ 600 пин тенкĕлĕх хуçалăх тата çимĕç таварĕсем сутать.

** Чăвашсойуз потребкооперацинче ĕçлеме кăçал тĕрлĕ курссем урлă 165 çын вĕрентсе хатĕрлерĕ. Вăл хисепрен райсойузсен инспекторĕсем—24, йалпо председателĕсем—54.

Халĕ Чăвашсойуз йатарласа усна курсра потребкооперации çиçтеминче ĕçлеме бухгалтĕрсем, счетоводсем 97 çын вĕрентсе хатĕрлет.

Йалпо работникĕсем 193 çын техминимум панă.

** Нойаберĕн 1-мĕш тĕлне Чăвашсойузăн çĕнĕ çуртне куçаççĕ. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх вăл çуртăн айалти хутĕнче Шупашкар торгĕн ресторанĕ пулмала. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш хучĕсенче Чăвашсойузăн тĕп кантурĕ вырнаçать.

Ку çурта тума пĕтĕмпе 670 пин тенкĕ хывнă.

ЙĂЛА ЫЙТĂВĔСЕМ

Мунчи—мунчах та...

Петĕр мучин Шупашкарта вĕренекен ывăлĕсем çулла киле килчĕç те, çынсене Шупашкарти мунча çинчен каласа тĕлĕнтерчĕç.

— Питех те паха мунча. Шывĕ—вĕри шыв та, сивви те темĕн чухлех. Ăшшийĕ вара, темиçе çĕр çын çапăнсан та пĕтмест...

Ывăлĕсене итлесе Петĕр мучи пĕрре кăна мар:

— Мĕнле пырса кĕрес ку мунчана. Те йатарласах кайас, те мĕнле те пулин сăлтав тупса кайас,—тенĕ.

— Йатарласа мар та, анчах Шупашкара пырсан-тусан, çав тери чаплă мунчана çитсе кĕме кирлех,—тенĕ ывăлĕсем ăшшĕне, колхоз мунчисĕр пуçне урăх мунчана кĕрсе курман старике.

* * *

Петĕр мучин ĕмĕчĕ çитрĕ çитрех. Уй ĕçĕсене пĕтерсен, авăнсем çапсан, сарă кĕркуннен пĕр кунĕнче Петĕр ывăлĕсем патне хăнана килчĕ. Шупашкар хулине лайăх курса çÿрерĕ. Кинора, Пичет çуртĕнче пулчĕ. Йулашкинчен, мунчана çитсе курас, кĕрсе çăвăнас, çапăнас, терĕ.

Петĕр тĕлĕнсех кайрĕ. Мунча çинчен йерипен те ретлĕн çак сăмахсене каласа пачĕ.

— Мунчи—мунчах... Калама çук аван мунча мĕн. Анчах вăл хуçасăр çурт йеверлĕ. Виçĕ кун хушшинче аран-аран кĕрсе тухрăм. Канмали кун карăм—халăх тÿллийĕх. Тăтăмăр, тăтăмăр—вĕри шыв çук, терĕç. Унтан тăрсан-тăрсан, сивĕ шыв çук, терĕç. Йулашкинчен, сутă сÿнсе ларчĕ. Тĕттĕм çĕрте тĕркĕшрĕмĕр-тĕркĕшрĕмĕр те кайала тухса кайрăмăр...

Петĕр мучи тепĕр кунне те мунчана кайнă мĕн, анчах мунчи канмали кунхи пекех ĕçленĕ. Унтан тепĕр кунхине мунчан хăйĕн канмали кун пулнă.

Унтан Петĕр мучи черетре икĕ сехет тăрса мунчана кĕнĕ-кĕнех.

— Аттесемĕрсем,—терĕ вăл вара,—сирĕн мунчара йĕрке сахал. Тасалăх çук. Хывăнна çĕрте пы... чăк. Çăвăнна çĕрте пушшех ... Унта мĕн кăна çук: хут та..., сем, милĕк çулçисем, ç... курăс татăкĕсем... Шыв йу..., мали шăтăксем питĕрĕнсе..., та—лапăрчăк шыв кÿленсе... Çапăнна çĕре кĕретĕн те... тÿрех сивĕ çапать. Мĕнш... çав терийех сивĕ? Лапка паратăн—унта сывлама ç... шăршă. Таса мар шыв кÿ... рать. Кивĕ милĕксем ку... йăванса выртаççĕ. Мунч... кенсем вĕсене илсе пăрах... ламаççĕ пулмала.

Çаксем çинчен колхоз ста... мунчара ĕçлекенсене те кала... пăхнă. Ăна хирĕç вĕсем:

— Виш, есĕ йепле çын! Хăна кура мар...—тенĕ.

— Мĕнле апла?—пÿлнĕ мучи.

— Вăл пирĕн ĕç мар. Есĕ каланисене техник çеç тума пулта... рать,—тенĕ те виççĕн-тăваттăн пĕр... харăс кулнă мунчара ĕçлекенсем.

Шупашкарти мунчара епĕ те... пулман мар. Петĕр мучи тĕрĕс... калать. Мунчине, паллах, хурлам... çук. Анчах унта ĕçлекенсем пи... ки калани, пирĕн шутпа та тĕ... сех. Мĕншĕн тесен, вĕсем тас... лăхшăн, культурăшăн тăрăшмаçç... Мунчара йĕркелĕх те çук, йа... ланах черет. Ку вăл, ыттисемсă... пуçне хула çитĕнсе пынинчен те... килет ĕнтĕ. Хули вăл малашн... те çитĕнмелех—çавăн пек вĕт пи... рĕн пуласлăх, ыранхи Шупашкар... Çавăнпа та, тепĕр мунча лартасс... çинчен шухăшласа пăхма вăхăт... мар-ши? Вăхăт! Анчах халь пур мунчана йĕркелĕ ĕçлеттерме тата ытларах вăхăт.

В. Мусс.

КĔСКЕН

* Çĕрпÿ районĕнчи йалпосенче ĕçлекен прикашчиксен пĕр уйăхлăх курсĕнчен 24 прикашчик вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем йалсене ĕçлеме саланчĕç.

Н. Окунĕв.

* Вăрнар районĕнчи „Трактăр“ колхозра пăспа ĕçлекен армана ĕçе йанă. Пăс машини çумне йĕтĕн тылламали машинă вырнаçтарса лартнă.

Н. Василйĕв.

* Йанмурзинă (Трак р.) колхозĕнчи осоавиахимăвĕçсем „Ворошиловский стрелок“ значок нормисене парас тĕлĕшпе хытă тăрăшаççĕ. Пайанхи куна 15 осоавиахимăвĕц ВС значокĕсем илчĕç.

А. Кисельов.

* Сапайкасси йалĕнчи (Ишлей р.) „Труд“ колхозра акушер пункчĕ уçнă. Унта ĕçлекен Матвейĕвă йулташ хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать, колхозниксем ăна йураççĕ.

П. Иванов.

* Хыркассинчи (Çĕрпÿ р.) „Кульмет“ колхозра çăм тапакан машинă лартнă. Вăл шывпа ĕçлет. Çăм тапакан машинă пĕр уйăхра колхоза 2400 тенкĕ тупăш панă.

А. Иванов.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн çурчĕ Октаберти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă йатпа выставкă организациленĕ.

Выставкă пайан, октаберĕн 30-мĕшĕнче уçăлать, кашни кулленех кăнтăрла иртсен 3 сехетрен пуçласа 10 сехетчен уçă пулать.

Хроникă

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Прокопий Йегоравич Александрăв йулташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Радиокомитет председателĕне лартнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ

Гидроузелăн Шупашкарти çурçĕр-хĕвеланăç отделенине

ОПЫТЛĂ ДЕЛОПРОИЗВОДИТЕЛ

ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.

Пымали адрĕс: Кадыков урамĕ, 6/2, кадрсен инспекторĕ патне.

„ЗАГОТЗЕРНО“

Шупашкарти хатĕрлев пунктне

БУХГАЛТĔРСЕМ ТАТА КАРТОТЕТЧИЦĂ КИРЛĔ.

Адрĕс: Нагорная улица, Одностороннка пункт „Заготзерно“.

3—3

Шупашкарти кăлбаса производствине кăлбаса тăвакан

ĂСТА МАÇТĂРСЕМ КИРЛĔ

Адрĕс: Коммунальная слобода, д 24.

Канашри финанспа економикă техникумне

ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЕ ВĔРЕНТМЕ

преподавател кирлĕ

ХВАТЕР ПУР.

Ĕçукçи килĕшÿ тăрăх.

Ыйтмали адрĕс: г. Канаш, финтехникум. ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти „Кооператор“ ертела

производствăлă бухгалтерине пĕлекен

АСЛĂ БУХГАЛТĔР

васкавлă кирлĕ

Ĕçукçи—килĕшÿ тăрăх, хватер параççĕ.

ПРАВЛЕНИ.

2—1

ЧЕБТОРГĂН 1-мĕш №-лĕ ПРОДМАГЕ

ПУР ГРАЖДАНСЕНЧЕН ТАТА ОРГАНИЗАЦИСЕНЧЕН ОКТАБЕРĔН 28-мĕшпе НОЙАБЕРĔН 5-мĕш ХУШШИНЧЕ

БУЛКĂСЕМПЕ КОНДИТĔР ТАВАРĔСЕМ:

ТОРТСЕМ, ПИРОЖНАЙСЕМ, КЕКС ТАТА ЫТ. КОНДИТĔР ТАВАРĔСЕМ ХАТĔРЛЕСЕ ПАМА

МАЛТАНАХ ЗАКАЗ ИЛЕТ

тата киле леçсе пама та заказ илет.

Вăхăтра, нойаберĕн 5-мĕшчен заказ пама васкăр. Нойаберĕн 5-мĕш хыççăнхи заказа пурнăçа кĕртме магазин гаранти памасть.

Пысăк заказсене организацисем таварне илес умĕн укçан тÿлесе илеççĕ.

ПРОДМАГ.

„ЧĂВАШ КОММУНЕ“ ÇЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ ПĔР УЙĂХА 2 Т. 50 ПУС. 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., ÇУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА ÇЫХĂНУ УЙРАМĔСЕМ, ПИСЬМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 613. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793. ф. б. 58 × 84 п. л.